НИКОЛАЙ УГАРИН

# САЛТАК ЮРАТĂВĚ

(драма)

Драмăри çынсем:

Верьялов – ефрейтор
Шабалин – рядовой
Капитан – рота командирě
Бело Копытов – сержант
Бегунов – кěçěн сержант
Данилов – рядовой
Маттуркин – рядовой
Мустафа – рядовой
Оксана – медицина службин кěçěн сержанчě
Тамара – медицина службин аслă сержанчě

## Пěрремěш пайě

*1 картина. Салтак столовăйěн пěр кěтесě: хлеборезкăна кěмелли алăк, унпа юнашарах - çăкăр памалли кантăк, вăрăм сěтелсем, сакăсем. Верьялов шухăша путса ларать. Капитан кěрет.*

КАПИТАН. Мěн, салтак, устава мантăн-и?
ВЕРЬЯЛОВ *(тăрать те честь парать).* Айăплă, капитан юлташ, шухăша путнăччě.
КАПИТАН. Çуралнă чухне шутласа тухмаллаччě. Халь шутламиалла мар санăн, приказа пурнăçламалла.. Ма пур çěрте те тусан? Ма тасатмастăн? Урайě тата мěн тěслě! Эс мěн, канма килнě-и кунта, тăмсай?!
ВЕРЬЯЛОВ. Ирхине çеç çуса тухнăччě. *(Шабалин кěрет.)*
КАПИТАН. Тавлашмасăр! Ну, мěнех, ефрейтор, малашне ман ротăра служит тăвасшăн-ха апла. Миçе çăкăр пушатрăн?
ВЕРЬЯЛОВ. Çěр сакăрвуннă.
КАПИТАН *(Шабалина).* Кӳр кунта накладнойна.
ШАБАЛИН. Эп ăна бухгалтерине кěртсе патăм.

КАПИТАН. Хӑш вӑхӑтра? Кӳр! *(Шабалин кӗсйинчен хут кӑларса парать.)* Ӑҫта ҫирӗмӗш?
ШАБАЛИН. Вӑл йӑнӑш шутланӑ.
КАПИТАН. Кӗсйӳне тавӑр.
ШАБАЛИН. Кӳрентеретӗр, капитан юлташ.

*Капитан Шабалин кӗсйине ухтарать, укҫа туртса кӑларать.*

КАПИТАН. Ыранах машинуна урӑххине паратӑн.
ШАБАЛИН. Ман ҫул ҫинче кустӑрма шӑтрӗ, гражданскийсенчен илтӗм, нулевка пачӗҫ. Ыран укҫа памалла. Хӑвӑр запаска памастӑр та.
КАПИТАН. Эп сана иртнинче мӗн терӗм?
ШАБАЛИН. Юлашки хут, капитан юлташ, тек сутмастӑп. Сӑмах паратӑп.
КАПИТАН. Суту-илӳ чирӗпе чирлерӗн-и?
ШАБАЛИН. Ӗҫе пула ҫеҫ.
КАПИТАН. Юрӗ, мана та пӗр ӗҫ туса паратӑн. Сухой паек нумайланса кайрӗ, сутса паратӑн мана. Пӑхатӑп та, сан клиентсем нумай пулас.
ШАБАЛИН. Паллах сутса паратӑп, капитан юлташ, мӗн сӑмахламалли пур.
САСӐ. Майрасем килеҫҫӗ. *(Бегунов тухать.)*
ШАБАЛИН *(кантӑкран пӑхса).* Капитан юлташ, унта сирӗн те Оксанапа пӗрле*. (Тухса каять.)*
САСӐ. Эх, ҫавӑрса ярасчӗ пӗрне.
БЕГУНОВ. Асту, ҫавӑрттарать сана Шабалин.
САСӐ. Хӑшӗ унӑн, вӑрӑм ҫӳҫли-и? Мана тепри те юрать.
КАПИТАН. Мӗн какаласа тӑратӑр унта, хӗр курман-и? Ӗҫлӗр!
БЕГУНОВ. Ӗҫлӗр, мӗн какаласа тӑратӑр, хӗр курман-и?!

*Шабалин, Тамара тата Оксана кӗреҫҫӗ.*

О, мӗнле хӑнасем... Оксана...
ШАБАЛИН. Бегунок, ҫухал.
БЕГУНОВ *(Тамарана шӳтлӗн честь парса).* Аслӑ сержант юлташ, столовӑй дежурнӑйӗ Бегунов кӗҫӗн сержант.
ТАМАРА. Бегунок, курнӑҫланса ан тӑр-ха, ҫӑкӑр пар часрах.
КАПИТАН. Ма ҫав териех васкаҫҫӗ ку хӗрсем?

ТАМАРА *(хăй тĕллĕн).* Вăл та кунта. *(Капитана.)* Автобус каять, килте çăкăр çукчĕ.
БЕГУНОВ. Пĕрре-и, иккĕ-и?
ТАМАРА. Иккĕ, иккĕ. Курмастăн-и миçен тăнине? Паян лавккана кайса килеймерĕмĕр.
ШАБАЛИН. Бегунок, эп хамах, сана кухняра кĕтеççĕ.
БЕГУНОВ. Тен сана?
ШАБАЛИН. Çухал. *(Оксанана.)*Атя, Оксана, ху суйласа илетĕн.
ОКСАНА. Мана кирлĕ мар, Тамарана çеç.
ШАБАЛИН. Тамара валли суйласа илетпĕр. *(Хлеборезка алăкне уçса Верьялова.)* Тух кунтан!
ВЕРЬЯЛОВ *(тухать, Оксанана.)* Здравствуйте.
ОКСАНА. Здрасте.
ВЕРЬЯЛОВ *(чĕнсе).* Тархасшăн.

*Оксанапа Шабалин кĕрсе каяççĕ.*

ТАМАРА.О, кунта сирĕн çĕнĕ çынсем те пур иккен.
КАПИТАН. Тамара...
ТАМАРА. Ăçтан тупса килтĕн ку йĕкĕте?
МУСТАФА *(хыпаланса кĕрет).* Кипитан юлташ, ирĕк парăр сирĕнпе калаçма.
КАПИТАН. Мĕн тата сана?
МУСТАФА. Кипитан юлташ, сире комбат телефонпа чĕнет.
КАПИТАН. Комбат? Тамара, кĕт мана, тархасшăн, ман санпа калаçмалли пур.
ТАМАРА. Мĕн, сĕнӳ пур-и? Кая юлтăн, капитан, эп паян пĕччен мар.
КАПИТАН. Эп ыйтатăп сана...
ТАМАРА. Çук ĕнтĕ, капитан, эсир пирĕн пеккисемпе çыхланса ятăра ан ярăр. Эсир хăвăрла çын, эпир хамăрла, пĕр чĕлхе тупасси пулмĕ. Салтаксемпе вара урăх сăмах.
КАПИТАН. Тамара...
ТАМАРА. Пăхатăп та, юлашки вăхăтра эс хăюлланнă, капитан.
КАПИТАН. Ман чăн та калаçмалла санпа.
ТАМАРА. Çăварлăхран вĕçертме юрамасть вара çаксене, тӳрех аяккинелле туртăнма пăхаççĕ. Асту, ĕрĕхтерсе ан кай, шурлăха кĕрсе ӳкме пултаран.

КАПИТАН. Кĕрсе ӳкмелле чухлĕ кĕрсе ӳкнĕ ĕнтĕ , халь çăлăнас пулать.
ТАМАРА. Ав мĕнле иккен! Çăлакан кирлĕ. Анчах эп çăлакан мар, эп сиплекен. Кай, комбат нумай кĕтме юратмасть.

*Капитан кайма тăрать.*

МУСТАФА. Кипитан юлташ, вăл сире Шибилинпа пĕрле чĕнет.
КАПИТАН. Шабалинпа? *(Верьялова.)* Ефрейтор, чĕн-ха ăна.

*Верьялов хлеборезка алăкне уçать.*

ШАБАЛИН САССИ. Хуп алăка!
ВЕРЬЯЛОВ. Сана ротный чĕнет.

*Шабалин тухать.*

КАПИТАН *(Шабалина).* Кил-ха кунта. *(Шабалин ун патне пырать.)* Эс паян тата ăçта пулнă?
ШАБАЛИН. Ниçта та, капитан юлташ.
КАПИТАН. Эппин ма комбат иксĕмĕре те чĕнтерет?
ШАБАЛИН. Капитан юлатш, ман çинче урăх çылăх çук.
КАПИТАН. Эс асту... Атя. *(Каять.)*
ШАБАЛИН *(Оксана патне пырса.)* Оксана, эп часах, кĕт мана.
ОКСАНА. Çук, пирĕн каймалла. Тамара, атя.
ШАБАЛИН. Пилĕк минут кĕтĕр ĕнтĕ. Ма васкатăр?
ТАМАРА. Вĕçтер атя, вĕçтер, пăх-ха ăна çипçăнчĕ.
КАПИТАН САССИ. Шабалин!

*Шабалин тухса каять.*

БЕГУНОВ. Мĕнле пурăнать вăрăм çӳçлĕ пике? *(Оксана унран пăрăнать.)* Ма пăрăнатăн?
ВЕРЬЯЛОВ. Бегунок, хăп ун çумĕнчен, ан хăрат хĕре.
БЕГУНОВ. Эс вообще чĕнмесĕр тăр! Кĕрсе лар, ав, хăвăн читлĕхне.
ВЕРЬЯЛОВ. Курмастăн-и, вăл калаçасшăн мар санпа.
ТАМАРА. Бегунок, начальство çук чухне атя-ха кăлар тутлисене.
БЕГУНОВ. Ман Оксанапа калаçас килет-ха.

ТАМАРА. Ун вырӑнне манпа калаҫан. Атя, ан хыт.
БЕГУНОВ. Эп хытатӑп-и? Эп хытсан та ҫемҫелме пултаратӑп, ҫумри пике те ҫемҫелсен. А, Оксана?
ТАМАРА. Бегунок, атя часрах.
БЕГУНОВ *(Тамарана).* Ҫемҫелетӗн-и вара?
ТАМАРА. Мӗн сӗннинчен килет.
БЕГУНОВ. Сизый, уҫ складна!

*Тамарапа Бегунов кӗрсе каяҫҫӗ.*

ВЕРЬЯЛОВ. Тен ман пата кӗрсе ларатӑн?
ОКСАНА. Ҫук, эп кунтах тӑратӑп.
ВЕРЬЯЛОВ. Ун сӑмахне ҫывӑха ан ил, иртӗхсе ҫеҫ вӑл. (Пауза.) Эс лазаретран-и?
ОКСАНА. Ӑҫтан пӗлетӗн?
ВЕРЬЯЛОВ. Эп сана лавккара курман, почтӑра та. Эппин лазарет ҫеҫ юлать. Эп хам унта пулса курман.
ОКСАНА. Унта лекмелле ан пултӑр та.
ВЕРЬЯЛОВ. Мӗншӗн? Ман унта халь юриех лекес килсе кайрӗ сан сассуна илтессишӗнех.
ОКСАНА. Мӗн тупнӑ эс ман сасӑра? Чирлетӗп эпӗ, сивӗ сӗт ӗҫрӗм. Е такама аса илтерет-и манӑн сас? (Верьялов чӗнмест.) Анчах та сасӑ вӑл сӑмахсӑр нимӗн ҫинчен те каламасть.
ВЕРЬЯЛОВ. Сӑмахсем суя, суя та ним пӗлтерӗшсӗр. Сасӑ вара... Сӑмахсенчен ытла сасса кура ҫын ӑшӗнче мӗн пуррине пӗлме пулать.
ОКСАНА. Анчах кашниййӗ тӑнламасть ӑна. Илтсессӗн те илтес темест. Чӗнсе тух, Тамарана... Ҫук, кирлӗ мар.
ВЕРЬЯЛОВ. Чӑнлӑх - ҫак самант, иртни – суя. Пулман иртни, малашлӑх кӑна илӗртӳллӗ, сассу пекех, пурӑнас килет.
ОКСАНА. Иртнисӗр малашлӑх ҫук, вӗсем пӗрле. Лайӑх-и вӗсем, япӑх-и, анчах пӗрле. Хӑтӑлас тесен те пӗр-пӗринчен хӑтӑлаймӗҫ.
ВЕРЬЯЛОВ. Сана итлесен пуҫу ҫине йывӑр чул ҫакӑннине туятӑн.
ОКСАНА. Сан ҫинчен те ҫавнах калама пулать. Анчах та ма ун пек каларӑн? Е илтнӗ-и мӗн те пулин?
ВЕРЬЯЛОВ. Ҫук, питӳ ҫинче кулӑ ҫукран туйӑнчӗ пуль.
ОКСАНА. Чул мар вӑл, мамӑк ҫеҫ, ахах, мерчен, ҫут кӗмӗл.
ВЕРЬЯЛОВ. Ҫут кӗмӗл пулнӑран ҫут кӗмӗл евӗр куҫҫуль юхать-и куҫунтан?

ОКСАНА. Тамарана кала, эпĕ утатăп.
ВЕРЬЯЛОВ. Тăхта. Каçар мана, эп сана кӳрентертĕм пулмалла. Сăмах пуçларăм тем çинчен.
ОКСАНА. Темех мар. *(Каять.)*
ВЕРЬЯЛОВ. Шел, манăн тата тăнлас килетчĕ санăн сассуна. Эп турра кĕлтăвăп сана тепре курас тесе. Турăçăм, мĕнлерех вăл! Тата мĕн чухлĕ хуйăх куçĕнче. Сасси вара... Пулать-çке тĕнчере пĕрпеклĕх.

*Тамарапа Бегунов тухаççĕ.*

ТАМАРА. Тавах сана.
БЕГУНОВ. Тата та кил. Сан пек хĕрсемшĕн эпĕ тем тума та пултарап.
ТАМАРА. Оксана ăçта?
БЕГУНОВ. Кайрĕ.
ТАМАРА. Кайрĕ? Мансăрах-и? Эх, Бегунок, хăратрăн эс ăна.
БЕГУНОВ. А мĕн хăйне тĕкĕнмен хĕр пек тыткалать.
ТАМАРА. Кун пирки сасăпа каламасан та юрать.
БЕГУНОВ. Пардон, тек шарламастăп. Вырсарникун, увольнительный илейсен, эп сана килӳнте тупма пултаратăп-и?
ТАМАРА. Темле çав. *(Верьялова.)* Эс вара мĕнле, çитес вырсарникун увольнительный илейетĕн-и.
БЕГУНОВ. Кам парать ăна? Чмо вĕт вăл. Комбат хӳттипе кăна тытăнса тăрать, атту пулсан...
ВЕРЬЯЛОВ. Эс хăвăнтан тĕслĕх илсе калатăн-и?
БЕГУНОВ. Пăчлан! Атту халех урай тăрăх хырăмпа шума тытăнан. Чмо эс! Чмо! Пĕл çавна! Эс те, Маттуркин та, Данилов та – пурте чмошниксем эсир!
ТАМАРА. Бегунок, чарăн!
БЕГУНОВ. Вăл манăн кайфа туртса илчĕ, вăл манăн ĕмĕте татрĕ, хлеборезкăна манăн вырăна кĕрсе ларчĕ.

*Капитанпа Шабалин кĕреççĕ.*

ШАБАЛИН. Эп айăплă-и-ха вĕсен çăкăрĕ вăхăтра пиçсе тухманшăн?
КАПИТАН. Каялла чаçе килмеллеччĕ, эс вара хула тăрăх...

ШАБАЛИН. Эп туртмалли илме ҫеҫ кайрӑм. *(Йӗри-тавра пӑхса.)* Ӑҫта Оксана?
ТАМАРА. Кайнӑ.
ШАБАЛИН. Кайнӑ?
ТАМАРА. Кайнӑ ҫав. Вӑт хӗр тус те ӑна, мана та кӗтсе тӑман.
ШАБАЛИН *(Бегунова).* Бегунок, эп сана мӗн терӗм?
БЕГУНОВ. Эп тӗкӗнмен ӑна, Жора, тупа тӑватӑп. Эп Тамарапа складра... Оксана вара хлебакпа юлчӗ. Кайран Оксана кунтан йӗрсе тухса кайрӗ, хам куртӑм.
ШАБАЛИН *(Верьялова).* Вӑл тӗрӗсне калать-и?
ВЕРЬЯЛОВ. Эп хамран айваннисене пусмӑрламастӑп.
ШАБАЛИН. Асту, ӑна куҫ хыв ҫеҫ... *(Тухса каять.)*
ТАМАРА. Жора, тӑхта, леҫсе яр-ха мана машинупа.
КАПИТАН. Тамара!..
ТАМАРА. Ҫук ӗнтӗ, калаҫу пулаймӗ пирӗн, капитан юлташ, маларах шутламаллаччӗ.
КАПИТАН. Эс мана нихӑҫан та каҫарас ҫук-и? Эпӗ халь...
ТАМАРА. Ирӗклӗ... Арӑмсӑр, ачасӑр, ҫакна каласшӑнччӗ-и эс мана? Лейтенант чухнехи пекех! Ҫамрӑклӑха аса илес терӗн-и? Ҫапла, ҫамрӑклӑх илӗртӳллӗ вӑл. Илӗртӳллӗ илӗртекен пур чухне, кайран вара...
КАПИТАН. Каҫар мана, ман ун пек тӑвас килмесчӗ.
ТАМАРА. Ҫапах та турӑн. Юрӗ, аса ан ил, лӗклентерет. Чипер! *(Каять.)*
КАПИТАН. Тамара! *(Бегунова.)* Сана мӗн тума лартнӑ кунта: киленме-и, ӗҫлеме-и? Ма каҫхи апат халь те сӗтел ҫинче мар? Ӗҫле кайса! *(Бегунов кухняналла чупса каять.)* Ытлашши иртӗхсе кайрӑр-ха эсир! Эп сире алла илетӗп илетӗпех! Ҫичӗ хут тарӑра кӑларма пуҫлатӑп. Хӑвӑр ятӑра манса кайичченех лӑскама пуҫлатӑп. Ӗҫлӗр!

*Ҫутӑ сӳнет.*

*2 картина. Рота казарми. Малти планра дневальнӑй тӑмалли тумба. Унпа юнашарах тумбочка тӑрать, ун ҫинче – телефон. Сулахай енче – бытовка, унпа юнашар - ҫӑвӑнмалли пӳлӗме, сылтӑм енче – япала типӗтмелли пӳлӗме кӗмелли алӑк. Япала типӗтмелли пӳлӗме хирӗҫ - канцеляри. Капитан кӗрет.*

КАПИТАН. Дежурный! *(Белокопытов чупса килет, ун çанни çинче «дежурный по роте» тесе çырнă пусма.)*
БЕЛОКОПЫТОВ. Капитан юлташ, рота дежурнăйĕ Белокопытов сержант.
КАПИТАН. Эсир мĕн пĕрин хыççăн тепри мана ура хуратăр?! Пурте пĕрле калаçса татăлтăр-и?! Ма дневальный вырăнта мар?
БЕЛОКОПЫТОВ. Дневальный!

*Данилов чупса килет те тумба çине хăпарса тăрать. Ун çанни çинче «Дневальный по роте» тесе çырнă пусма.)*

ДАНИЛОВ *(капитана чеç парса).* Капитан юлташ...
БЕГУНОВ. Кăшкăр «смирно» тесе, тормоз!
ДАНИЛОВ. Рота, смирно!
КАПИТАН. Ротăра пĕр йĕрке те çук. *(Канцелярине кĕрсе каять.)*
БЕЛОКОПЫТОВ. Тумбочка çинчен тепре ансан... Пиçихине пăварах çых! *(Данилова пиçихинчен туртать, кайран ăшĕнчен тапать те аякка каять.)*
ДАНИЛОВ. Мартышка... *(Коридорпа Маттуркин иртсе пырать.)* Вовчик, тăхта-ха. *(Маттуркин чарăнать.)* Ну, мĕнле сан ĕççем? Ĕçне хупнă-и, прокурора паман-и?
МАТТУРКИН. Тепре тарсан параççĕ.
ДАНИЛОВ. Эс мĕн, тепре тарасшăн-и? Асту, ун чухне сана хамах тытса хĕнетĕп.
МАТТУРИКН. Ман урăх çĕре куçасчĕ.
ДАНИЛОВ. Урăх çĕрте мĕн, лайăх тетĕн-и? Стукач. Шаккамалла марччĕ, веçех ху çине илмеллеччĕ, вара сана никам та тивмесчĕ.
МАТТУРИК. Сан крем çук-и?
ДАНИЛОВ. Ман тумбочка хăшне пĕлетĕн-и? Сунтăхне веçех туртса кăларатăн та аллуна чи хыçала чиксе яратăн. Тупатăн унта.

*Маттурик каять, урамран Шабалин кĕрет. Данилов ăна честь парать.*

ШАБАЛИН. Ну, приказчен миçе?
ДАНИЛОВ. 56.
ШАБАЛИН. Хыв пилоткуна. *(Данилова пуçĕнчен шакать.)*
ДАНИЛОВ. 55

ШАБАЛИН. Тек нихӑҫан та ан йӑнӑш. *(Маттуркин килет.)* Эс вара... Эс тек ман куҫ умне ан курӑннӑ пултӑр. Сан пеккисене пула дембеле те вӑхӑтра каяймӑн. Ҫухал! *(Маттурикин урама тухса каять. Данилова.)* Нихӑҫан та ун пек ан пул. *(Коридор тӑрӑх малалла каять.)* Ну, мӗн йытӑ пуҫӗсем , кӗтмерӗр-и мана?
МАТТУРИН *(алӑка кӑшт уҫса.)* Щетка пар-ха.

*Данилов тумбочкӑран щетка кӑларса Маттуркина парать, леш ҫухалать.*

КАПИТАН САССИ. Дневальный!
ДАНИЛОВ. Рота дневальныйӗ, алӑк умне! (Пауза.) Дневальный!
МУСТАФА *(васкамасӑр килет, ун ҫанни ҫинче «Дневальный по роте» тесе ҫырнӑ пусма.)* Мин кишкиран? Хӑльхисӗр мар, илтеп. *(Канцелярине кӗрсе каять те кӑшт тӑрсан тухать.)* Сиржант юлташ! Сиржант юлташ! *(Белокопытов килет.)* Сиржант юлташ, сана карифан чӗнет.
БЕЛОКОПЫТОВ. Мӗнле карифан?
МУСТАФА. Хамӑр карифан, рота карифан, кипитан карифан.
БЕЛОКОПЫТОВ. Тупнӑ карифан. Ну, Мустафа... *(Канцелярине кӗрсе каять.)*
МУСТАФА. Кунта кам хура тунӑ? Данил, эс мӗн, суккӑр? Пӑрӑн, эп тумбочка тырап, эс тряпка тыт та урай сытӑр.
ДАНИЛОВ. Эс дневальный, эс сӑтӑр.
МУСТАФА. Эс дневальный мар-и? *(Даниловӑн ҫанни ҫинчи пусмана тӗллесе.)* Мин ҫырнӑ? «Дневальный по рота» ҫырнӑ. Сытӑр!
ДАНИЛОВ. Нумай калаҫ-ха, пӑрахатӑп та каятӑп. Вара тумбочка ҫинче те ху тӑран, урайне те хӑвах сӑтӑран.
МУСТАФА. Мустафа таса юрататать, Мустафа паккӑҫ тряпка тытмасть. Данил пусать, паккӑҫ тӑвать. Ҫавна Мустафа ҫӑвать? Тыт тряпка! *(Данилова тумбочка ҫинчен чышса антарать.)*
ДАНИЛОВ *(Мустафана кӑкӑрӗнчен чышса).* Тыт ху!
МУСТАФА. Эс мана чышан? Мана?
ДАНИЛОВ. Сана.
МУСТАФА. Эп вит сана куншӑн... *(Иккӗш тӗркешеҫҫӗ.)*
БЕЛОКОПЫТОВ *(канцеляринчен тухать).* Отставить! Мӗн тӗркешӗвӗ ку? Чарӑнӑр!

МУСТАФА. Сиржант юлташ, Данил каланине итлемест. Хура тăвать, таса тумасть. Тумбочка эп тырап, эс урай таса ту, терĕм. Эп тумбочка тытăм, вăл таса тумасть.
БЕЛОКОПЫТОВ. Ма итлеместĕн, Данил?
ДАНИЛОВ. Мана команда пама вăл маншăн никам та мар. Çитменнине тата эп нарядра та мар, ун ĕçне тумастăп.
БЕЛОКОПЫТОВ. Тумастăп сăмах çук çарта.
ДАНИЛОВ. Устав тăрăх вăл хушни маншăн...
БЕЛОКОПЫТОВ. Йĕмӳ тĕпне пĕтĕрсе чик уставна. Кунта ман устав. Эп нарядра чухне пĕр салтак та ахаль лармасть. Ытла нумай пĕле пуçланă-ха эс. Пилоткуна тĕрĕс ларт! *(Даниловăн пилоткине пуçĕ çинчен çапса ӳкерет.)* Çуха айĕ тата мĕн тĕслĕ. Ма тасине çĕлеместĕн?
ДАНИЛОВ. Хăвăр тумбочка çине...
БЕЛОКОПЫТОВ. Палкамасăр! Халь итле эп мĕн каланине. Хлеборезкăна каятăн та Верьяловран пĕр буханка çăкăр, сахăр тата пысăк татăк çу ыйтатăн. Çителĕклĕ пултăр тулькка. Хам валли тетĕн. Ăнлантăн-и?
ДАНИЛОВ. Ман çиес килмест.
БЕЛОКОПЫТОВ. Эп санран çиес килет-и, килмест-и тесе ыйтмарăм, эп сана ăнлантăн-и, терĕм.
ДАНИЛОВ. Ăнлантăм.
БЕЛОКОПЫТОВ. Вĕçтер! *(Данилов кайма тăрать.)* Тăхта! Тепĕр тесен хăть те мĕн каласа ыйт, анчах та икĕ минутран çăкăр кунта пултăр.
МУСТАФА. Сиржант юлташ, вăл илсе килеймест. Атя хам кайса илсе килетĕп, вăл тумбочка тăтăр.
БЕЛОКОПЫТОВ. Вăл каять. *(Маттуркин кĕрет.)* Маттуркин, тăхăта-ха. Эс хăçан çуралнă?
МАТТУРКИН. Январьте.
БЕЛОКОПЫТОВ. Çук, эс январьте мар, эс паян, августăн виççĕмĕшĕнче çуралнă. Ăнлантăн-и?
МАТТУРКИН. Ăнлантăм.
БЕЛОКОПЫТОВ. Маттуркинăн, земăн, çуралнă кунĕ тен. Эпир кунта чей лартатпăр. Вĕçтер, пĕр уру кунта, тепри унта. Тăхта! Çăкăрсăр луччĕ ан кил. *(Данилов тухса каять.)* Маттуркин, эс хăçан çуралнă?
МАТТУРКИН. Августăн виççĕмĕшĕнче.
БЕЛОКОПЫТОВ. Маттур, хушамату пекех. Пар кута щеткуна.

МАТТУРКИН. Вăл Даниловăн.
БЕЛОКОПЫТОВ. Вара мĕн? *(Маттуркин кремпа щеткине парать.)*
ШАБАЛИН *(килет).* Эс татах ман куç умĕнче-и? Вĕçтер, вĕçтер часрах кунтан! *(Маттуркин чупса каять.)* Белый, ман кĕçĕр çухалмалла пулать.
БЕЛОКОПЫТОВ. Мĕн, каллех Оксана патне тапса сикесшĕн-и? Эп нарядра чухне мар, Жора.
ШАБАЛИН. Никам та сисмест.
БЕЛОКОПЫТОВ. Ротныйа тем пулнă паян, хаяр. Ыран каятăн.
ШАБАЛИН. Ыранччен кĕтейместĕп эпĕ. Ман ырăн çине хума катемпи хатĕрлесе хур.
БЕЛОКОПЫТОВ. Мана тепрехин хупа пĕрле илсе каятăн, катемпи пулать.
ШАБАЛИН. Мĕн, дембельччен чăтаймастăн-и?
БЕЛОКОПЫТОВ. Эс чăтаймастăн-çке.

*Пĕр-пĕрне шўтлĕн хуллуççийĕсенчен чышса илеççĕ. Белокопытов Шабалина щетка тытнă аллипе чышать, лешин тумĕ вараланать.*

ШАБАЛИН. Белый, эс мĕн, юри-и?
БЕЛОКОПЫТОВ. Каçар, алла щетка тытнă пирки мансах кайрăм. Кам парса хăварчĕ ăна мана! *(Щеткипе кремне ывăтса ярать.)*
ШАБАЛИН. Çак тумпа хĕр патне мĕнле каяс манăн?
БЕЛОКОПЫТОВ. Каçар, братан, халех çутаратăп.
ШАБАЛИН. Эс дед пулман пулсан пĕлетĕн-и сана халь мĕн тăваттăм?!
БЕЛОКОПЫТОВ. Юрĕ-çке сана! Юри мар вĕт.
ШАБАЛИН. Отбойччен ĕлкĕреймесен, асту, хăвăнне хывса каятăп.
БЕЛОКОПЫТОВ. Маттуркин!
ШАБАЛИН. Да ну ăна! Мана тата унпа çыхлантарасшăн-и? Капла та ак çакăнта вăл манăн. *(Карланкине кăтартать.)*
БЕЛОКОПЫТОВ. Ан хăра, халь вăл губара ларса ăслăланнă.
МАТТУРКИН *(килсе чеç парать).* Сержант юлташ, Маттуркин рядовой эсир хушнипе килчĕ.
БЕЛОКОПЫТОВ. Маттуркин, тепре те таратăн-и-ха?
МАТТУРКИН. Çук.
БЕЛОКОПЫТОВ. Илтрĕн-и? Халь вăл маттур салтак. Губаран килсен эпир унпа лайăх калаçрăмăр. Тулькка пўресем çеç кăштах ыратаççĕ пуль, çапла-и?

МАТТУРКИН. Ыратаççĕ.
БЕЛОКОПЫТОВ. Янах шăмми?
МАТТУРКИН. Вăл та.
БЕЛОКОПЫТОВ. Манăн та пĕçĕсем ыратаççĕ çав. Сана пула çырмасем тăрăх чĕлхе тăсса нумай чупма лекрĕ. Халь итле мана: ак çакна тытатăн та чип-чиста пуличчен çавăнта кĕрсе çăватăн. *(Маттуркина х-б парать. Маттуркин пĕр вырăнта тăрать.)* Ну, мĕн тăратăн?
ШАБАЛИН. Е çумастăп тесшĕн-и? Мана хирĕçлесшĕн-и? *(Маттуркин чĕнмест.)* Кур-ха ăна, çак чмошник мана хирĕçлет. Амăшĕпе ыталанса çывăрнă çĕртен тăратса илсе килнĕ те ăна, вăл халь хăйне арçын вырăнне хурса тăрать. Ну, пăх-ха ун çине! Çăкăртан тăранайман вăл. Пушатнă вăхăтра çини çитмест, тата кĕсйине чиксе кайнă. Чмо! Çу часрах, атту хăвна ванна ăшне чиксе кăларатăп, ăс кĕтĕр кăштах.
БЕЛОКОПЫТОВ. Кĕрсе çу часрах! *(Маттуркина чышса çăвăнмалли пӳлĕме кĕртсе ярать.)*
ШАБАЛИН. Ывăнтăм эпĕ, Белый, ох, мĕнле ывăнтăм. Дембельччен дисбата лекетĕп-и-ха ĕнтĕ. Хама мĕнле те пулин тытса часрасчĕ.
БЕЛОКОПЫТОВ. Асту çав.
ШАБАЛИН. Çĕнĕ хлебак тата пăтăрмахсем туса тăрать. Ма комбат ăна лартрĕ-ха, а? Ахальтен мар вĕт.
БЕЛОКОПЫТОВ. Мĕн, илсе тухма чăрмантарать-и?
ШАБАЛИН. Сисрĕн пулсан шăлна çырт.
БЕЛОКОПЫТОВ. Ротныйа та килĕшмест пулас вăл ача.
ШАБАЛИН. Тепĕр тесен, вĕсем те айăплă мар, Хама хирĕçленине чăтма пултараймастăп. Хăçан çитĕ-ши дембель?! *(Коридорпа каять.)* Эй, гитарист, ăçта эс?!Юрла атя, кил çинчен юрла, анне çинчен юрла.

*Канцеляринчен капитан тухать.*

МУСТАФА *(кăшкăрса).* Рота, смирно!
БЕЛОКОПЫТОВ. Тăмсай, ма кăшкăратăн? Вăл урамран кĕмерĕ вĕт.
КАПИТАН. Ну дневальный та сан. Пар-ха ăна устав, вĕрентĕр хăйĕн тивĕçне.
МУСТАФА. Кипитан юлташ, эп сире хисеплесе кашни иртсе каймассерен команда пама хатĕр.

КАПИТАН. Мана эс хисеплени кирлĕ мар, устава пăхăн. *(Коридор тăрăх малалла каять.)*
БЕЛОКОПЫТОВ *(Тумбочкăран кĕнеке кăларса Мустафана парать).* Тыт та çакна, вула. Хăвăн тивĕçне пăхмасăр калама вĕренмесĕр тумбочка çинчен анаймастăн. *(Мустафа пуçне суллать.)* Мĕн пуçна суллатăн, вулама пĕлместĕн-и?
МУСТАФА. Мустафа вулама пĕлет, Мустафа ăнланма пĕлмест.
БЕЛОКОПЫТОВ. Тăра-тăра ывăнсан вулама кăна мар, ăнланма та вĕренен.
МУСТАФА. Сиржант юлташ, атя унта çырнине вĕрениччен эп сана ташласа паратăп. *(Тумбочка çинчех ташлама тытăнать.)*
БЕЛОКОПЫТОВ. Ну, Мустафа... Ну, Мустафа... Санпа кичемленсе лараймăн. Ну, ăçтан ун çне алă çĕклĕн-ха. Смирно! *(Мустафа ташлама чарăнать.)* Вольно. *(Мустафа татах ташлама тытăнать.)* Вольно! *(Мустафа хытса тăрать.)* Вольно, терĕм эп...
МУСТАФА. Эх, сиржант, пĕрре те хамăрла мар эсир.

*Данилов кĕрет.*

БЕЛОКОПЫТОВ. Çăкăр ăçта?
ДАНИЛОВ. Памарĕ.
БЕЛОКОПЫТОВ. Лайăхрах ыйтмаллаччĕ.
ДАНИЛОВ. Ыйтрăм.
БЕЛОКОПЫТОВ. Çуралнă кун темеллеччĕ.
ДАНИЛОВ. Терĕм.
БЕЛОКОПЫТОВ. Тен эс ăна шаккаса панă? Кала, шаккарăн-и?
ДАНИЛОВ. Кўрентеретĕр, сержант юлташ, эп...
БЕЛОКОПЫТОВ. Ну, Верьял... Мĕнле çын вăл? Хăйĕн землякне те памасть.
КАПИТАН САССИ. Ку кравате ма тĕрĕс мар пуçтарнă? Бегунов, вĕрент салтакусене кравать пуçтарма.
БЕГУНОВ САССИ. Ну, Верьял... Эй, духсем, подъем! кашни кравате салатса çĕнĕрен пуçтарса тухăр. Пурте, пурте...
КАПИТАН *(килет, Белокопытова).* Пурте йĕркеллĕ-и кунта?
БЕЛОКОПЫТОВ. Пулать ... йĕрке.
КАПИТАН. Эп дежуркăра пулатăп. *(Каять.)*
МУСТАФА *(кăшкăрса).* Рота...
БЕЛОКОПЫТОВ. Пăчлан эс! (*Данилова.)* Тăр тумбочка çине.
ДАНИЛОВ. Сержант юлташ...

БЕЛОКОПЫТОВ. Ăнланмалла мар каларăм-и?
МУСТАФА. Тыр тенĕ сана, тыр. Аслисене итлемелле, вула устав.

*Данилов тумбочка çине тăрать.*

БЕЛОКОПЫТОВ. Мустафа, кайса пăх, Маттуркин мĕн тăвать унта.
МУСТАФА *(çăвăнмалли пӳлĕм алăкне уçса).* Çывать, тырăшса çывать.

*Белокопытов коридорпа каять.*

ДАНИЛОВ. Мустафа, тăр-ха тумбочка çине.
МУСТАФА. Тата мин?
ДАНИЛОВ. Самантлăха çеç ĕнтĕ.
МУСТАФА. Эп устава капла та пĕлеп. *(Каять.)*
ДАНИЛОВ *(çăвăнмалли пӳлĕм алăкне уçса).* Вовчик, эс камăн х-б-не çăватăн? Эс ху мĕн хăтланнине пĕлетĕн-и хăть? Эс пире ура хуратăн.

*Верьялов кĕрет.*

ВЕРЬЯЛОВ. Эс ма тумбочка çинче?
ДАНИЛОВ. Белый урсах кайнă.
ВЕРЬЯЛОВ. Вара?
ДАНИЛОВ. Нимĕн те. Памаллаччĕ санăн, кӳпĕнччĕр антив. Шел-им сана çăкăр?
ВЕРЬЯЛОВ. Вĕсене çăкăр кирлĕ тетĕн-и? Вĕсене эпĕ кирлĕ. Анчах та вĕсем мана унашкал илеймĕç. Калаçсан калаçма пулать мана, анчах йĕркеллĕ, çынла.
ДАНИЛОВ. Ватаççĕ вĕсем сана, инвалида кăлараççĕ. Эп те нимĕнпе те пулăшаймăп.
ВЕРЬЯЛОВ. Курмаллине курмаллах, ан тумбочка çинчен.
ДАНИЛОВ. Санек, эп хăратăп. Хамшăн мар, саншăн хăратăп.
ВЕРЬЯЛОВ. Çавă пĕтерет те пире, хăрани пĕтерет. Хĕнессинчен мар, хăрассинчен хăра. Дневальный! *(Мустафа килет.)* Тăр тумбочка çине.
МУСТАФА. Данил, эс ма антăн?
ВЕРЬЯЛОВ. Нумай ан калаç, тăр вырăнна.
ДАНИЛОВ. Тен çыхланмастăн, а?

ВЕРЬЯЛОВ. Хам пуçламастăп эпĕ, хăйсем пуçласан вара... Моисей ăçта?
ДАНИЛОВ. Дежуркăра. Ма кураймасть вăл сана?
ВЕРЬЯЛОВ. Туртмалли пур-и?
ДАНИЛОВ. Эсĕ туртмастăн вĕт.
ВЕРЬЯЛОВ. Пар.
ДАНИЛОВ. Ме, Мальборо. *(Сигарет парать.)*
БЕЛОКОПЫТОВ *(килет).* Ку мĕнле фигня? Кам ирĕк пачĕ сире кунта турма?
ВЕРЬЯЛОВ. Кама куратăн эсĕ туртнине? Эпир туртма пуçламан-ха.
БЕГУНОВ *(килет).* Камсем шавлаççĕ, мĕн пирки шавлаççĕ?
БЕЛОКОПЫТОВ. А ну марш урама! *(Верьялова чышать.)*
ВЕРЬЯЛОВ *(ун аллисене ярса илсе вăйпа антарать).* Аллусене пуçтар.
БЕГУНОВ. О-хо, хăюллă ача. Пăх-ха, пăх-ха ун çине мĕнлерех каçăрăлса тăрать. Калăн хăйĕн кăкăрĕсемпе амбразурăна хуплать. Куçĕсемпе тата мĕнле пăхать, никамран та хăрамасть тейĕн.
БЕЛОКОПЫТОВ. Кĕçех хупăнаççĕ, пуçĕ те усăнать.
БЕГУНОВ. Ну, хăçан хăна тăватăн-ха пире? Çĕнĕ должнăçа çăвас пулать. Е шел-и сана çупа çăкăр, сахăр, а? Примерлă ача, уставпа пурăнать. Турттар. *(Данилов сигарет сĕнет.)* Эп санран мар, унран ыйтрăм.
ДАНИЛОВ. Эп уншăн паратăп.
БЕГУНОВ *(Даниловăн сигаретне ывăтса ярать.)* Эп кун пек шăршлине туртмастăп.
ШАБАЛИН *(килет).* Мĕншĕн виçĕ çынран ытла пуçтарăнна? Мĕн çӳтсе яватпăр?
БЕГУНОВ. Çĕнĕ хлебакпа киленетпĕр.
ШАБАЛИН. Пулмасть унран хлебак пуласси.
ДАНИЛОВ. Юрĕ-çке, атсем, çăватпăр, паллах. Ак укçа илетпĕр те...
БЕЛОКОПЫТОВ. Эс вара уншăн хуравласа ан тăр, санран ыйтмасççĕ. Кай кубрике.
ДАНИЛОВ. Çукшăн ма хирĕçетĕр? Пĕрле служит тумалла-çке.

*Бело Копытов Данилова хăваласа ярать.*

ШАБАЛИН. Итле-ха, мĕнле ача пултăн эсĕ? Е ытла тӳрĕ чунлă-и?

БЕГУНОВ. Тен вăл выçă? Тен сушка çиесшĕн, а? Верьял, сушка çиетĕн-и? *(Шабалин аллинчи сушкăна илсе сĕнет.)* Ме, çи. Ма илместĕн?
БЕЛОКОПЫТОВ. Вăл эпир çиекен апата çимест, йĕрĕнет.
БЕГУНОВ. Чунтан хăналатпăр, çи.
БЕГУНОВ. А вăл çусăр çиме хăнăхман.
ШАБАЛИН. Пирĕн ротăра пурăнас тесен, эпир каланă пек тăвас пулать. Куратăн, сан умăнта сержант тăрать, эс вара ефрейтор çеç. Сержант хушнине итлемелле.
БЕГУНОВ *(сушкине Верьялов çăварне чышса).* Çи, Верьял, çи.
ВЕРЬЯЛОВ *(сушкине туртса илсе).* Тавтапуç. *(Малалла утса кайма тăрать.)*
БЕГУНОВ *(ун çулне пӳлсе).* Пĕр самант! Хлеборезкăри пек вăрттăн пытанса мар, пирĕн умра çинине юрататпăр эпир.

*Верьялов сушкине çыртса илет.*

ШАБАЛИН. Маттур, каланине итлет. Вăт кун пек пурăнма пулать.
БЕЛО КОПЫТОВ *(çăвăнмалли пӳлĕм алăкне уçса).* Çуса пĕтертĕн-и? Хăçанччен çăрăласшăн эс унта?
МАТТУРКИН *(тухать, ун аллинче йĕпе х-б).* Пĕтертĕм.
БЕЛОКОПЫТОВ. Халь бытовкăна кĕр те вĕри утюгпа типĕт часрах.
ШАБАЛИН. Тăхта! Ма начар пăртăн?
МАТТУРКИН. Лайăхах пăртăм.
ШАБАЛИН. Хлебак, эс вăйлă, пăрса пар.
МАТТУРКИН. Эп хамах.
БЕЛОКОПЫТОВ. Верьяла пар.
БЕГУНОВ. Верьял, эпир кĕтетпĕр.
ВЕРЬЯЛОВ. Белый, сан плану тăрăх манăн тата мĕн тумалла?
БЕЛОКОПЫТОВ. Кам вырăнне хуратăн эс мана?
ВЕРЬЯЛОВ. Маттуркин, х-б-не урайне пăрах.
МУСТАФА. Мĕ-ĕн?
БЕГУНОВ. Интереслĕ, интереслĕ. Ну-ну, малалла...
ВЕРЬЯЛОВ. Пăрах, теççĕ! Вĕсен тарçи пулса тăрасшăн-и?
БЕЛОКОПЫТОВ. Маттуркин, пăрах кăна – кăнса выртатăн.
БЕГУНОВ. Маттуркин, пăрах, хăвăн мар-çке.
ШАБАЛИН. Эс тата вĕслетсе ан тăр-ха. Хывса пар хăвăнне.
БЕЛОКОПЫТОВ. Маттуркин, кам сан командир?
МАТТУРКИН. Белокопытов сержант.

БЕЛОКОПЫТОВ. Илтрĕр-и? Белокопытова сержант. Кам каланине итлемелле сан? Командир каланине. Пар х-б-на Верьяла.
ВЕРЬЯЛОВ. Маттуркин, пăрах, тетĕп.
ШАБАЛИН. Вĕлеретĕп.
БЕГУНОВ. Пăрах, Маттуркин.
ДАНИЛОВ. Сержант юлташ, юрĕ-çке сире...
МАТТУРКИН. Каçар, Верьял, эп сан майлă пулма пултараймастăп. Эп айăплă, айăплă ун умĕнче. Çăкăр татăкне унран вăрттăн хĕстерсе тухрăм, хам вара тытсан унран ыйтса илсе тухрăм, терĕм. Çăкăрĕ ытла та тутлăччĕ, килти çăкăр пекех. Эп айăплă, вăл хĕненипе эп тухса кайрăм-çке чаçрен. Эп каялла таврăнимченех вăл хăйне айăпласса кĕтсе тăнă. Эпĕ ăна сутасран хăраса тăнă. Анчах эпĕ ăна сутмарăм. Ма тартăн тесе ыйтсан веçех хам çине илтĕм. Хĕненĕ пирки - çур сăмах та. Верьял, каçар мана, анчах та эп урăхла тума пултараймастăп. Хăнăхман. Мана аттепе анне мĕн ачаран... Эсĕ те каçар. *(Шабалин умне чĕркуçленет.)*
ВЕРЬЯЛОВ. Кам умĕнче чĕркуçленетĕн? Тăр! *(Маттуркина çĕклесе чышса ярать, лешин аллинчи х-б урайне ӳкет, хăй алăк каççакĕ çине пырса тăрăнать.)*
ШАБАЛИН. Ну, Верьял, ху валли шăтăк алтма хатĕрлен.
БЕЛО КОПЫТОВ *(аяккалла).* Ма кĕпĕрлентĕр кунта? Кайăр кубрика!
ШАБАЛИН. Братансем, вататпăр-и хлебака?
ВЕРЬЯЛОВ. Мĕн, пĕччене-пĕччен хăратăн-и?
ШАБАЛИН. Камран? Санран-и?
ВЕРЬЯЛОВ. Манран.
ШАБАЛИН. Ху айна ан яр. Ытла мăнна хуратăн иккен эс хăвна.
ВЕРЬЯЛОВ. Эпĕ хама мăнна хумастăп, анчах кӳретерме те памастăп.
БЕГУНОВ. Пар ăна мана, Жора, сан вырăнна хам вататăп.
ШАБАЛИН. Çук, эпĕ хамах.
БЕЛОКОПЫТОВ. Кунта мар тулькка, сушилкăна кĕрĕр.
БЕГУНОВ. Ислет ăна, Жора!
ШАБАЛИН. Атя!

*Шабалинпа Верьялов япала типĕтмелли пӳлĕме кĕрсе каяççĕ. Ыттисем аякран пăхса тăраççĕ. Çапăçнă сасă илтĕнет.*

ДАНИЛОВ. Белый, чар вĕсене. Эс пуçларăн, эсех чар.

БЕЛОКОПЫТОВ. Кам каларĕ эп пуçларăм тесе? Кил-ха кунтарах...

*Капитан кĕрет.*

МУСТАФА. Рота, смирно!
БЕЛО КОПЫТОВ *(капитан патне чупса пырса чеç парать).* Капитан юлташ...
КАПИТАН. Мĕн шавĕ унта?
БЕЛОКОПЫТОВ. Верьялов.
КАПИТАН. Татах Верьялов? *(Çапăçнă енне.)* Мĕне пĕлтерет ку? Çитет! Верьялов ефрейтор! Кама калаççĕ!.. *(Япала типĕтмелли пӳлĕме кĕрсе каять.)*
ВЕРЬЯЛОВ. Кай-ха эсĕ кунтан!
КАПИТАН. Мĕн? Ну, эп сана куншăн... *(Верьялова чышса кăларать.)* Çапкаланчăк! *(Белокопытова.)* Çĕкле ротăна.
БЕЛОКОПЫТОВ. Рота, строиться!

*Салтаксем строя тăраççĕ те шăпланаççĕ.*

БЕЛОКОПЫТОВ. Рота, равняйсь, смирно! Капитан юлташ, эсир хушнипе рота строя тăчĕ. Рота дежурнăйĕ Белокопытов сержант.
КАПИТАН. Вольно!
БЕЛОКОПЫТОВ. Вольно!
КАПИТАН. Смирно! Верьялов ефрейтор*. (Пауза.)* Илтместĕп.
БЕЛО КОПЫТОВ *(Верьялов умне пырса).* Эс мĕн йĕтĕр çăтрăн-и?
ВЕРЬЯЛОВ. Тасал эс.
КАПИТАН. Верьялов ефрейтор!
ВЕРЬЯЛОВ. Эпĕ.
КАПИТАН. Илтместĕп.
ВЕРЬЯЛОВ. Эпĕ!
КАПИТАН. Верьялов ефрейтор, Шабалин рядовой, тухăр строй умне! *(Верьяловпа Шабалин строй умне тухаççĕ.)* Эсир, юлташсем, юлашки вăхăтра иртĕхе пуçларăр. Ротăра пĕр дисциплина та çук. Пирĕн чаç - уставпа пурăнакан тĕслĕхлĕ çар чаçĕ. Асра тытăр çакна! Çавăнпа та сире устава пăсма никам та ирĕк памасть. Верьялов ефрейтор вара ăшă çĕре кĕрсе ларнипе иртĕхсех кайрĕ: уншăн сержант та сержант мар, офицер та офицер мар. *(Верьялов умне тăрса.)* Ма тӳммӳне япăх çĕленĕ?! *(Верьяловăн х-б çумĕнчи тӳммине татса ывăтса ярать.)* Смирно команда пулнă! Эпĕ сана,

ачамккă, вырăна лартатăп-лартатăпах. *(Маттуркина асăрхаса.)* Ку тата мĕне пĕлтерет? Кам эс?
МАТТУРКИН. Маттуркин рядовой.
КАПИТАН. Ма кун пек сăнлă? Кам хĕнерĕ? Эпĕ санпа калаçатăп: кам хĕнерĕ? *(Маттуркин чĕнмест.)* Верьялов ефрейтор, эсĕ хĕнерĕн-и? Е хăвăн айăпна йышăнма хал çитерейместĕн-и? Вăйлă сăрласа янă вăл сана.
МАТТУРКИН. Вăл мар.
КАПИТАН. Ма суятăн?
МАТТУРКИН. Суймастăп.
КАПИТАН. Хăйне уншăн ислетес килмест-и? Атя, ирĕк паратăп, шăхăртса яр пĕрре лайăх кăна. Ну, мĕн тăратăн, шеллетĕн-и? Вăл сана шеллемен-çке.
МАТТУРКИН. Вăл çапман мана.
КАПИТАН. Кам?
МАТТУРКИН. Хам ӳкрĕм.
КАПИТАН. Эс каллех суятăн? Хăвна хĕнекене хӳтĕлесе эс капла дисбата та лекме пултаран. Белокопытов, леçтер ăна лазарета. *(Шабалина.)* Эс строя тăр. Ну, Верьялов, çупа çăкăр çисе тăрантăн пуль. Атя, каçару ыйт, эп каçарттарма юрататăп.
ВЕРЬЯЛОВ. Ăсатăр часрах губана.
КАПИТАН. Эс мана вĕрентсе ан тăр! *(Телефон трубкине тытса.)* «Гранит», «Гранит», елки... Мĕн çывăратăр унта?! Комбата пар. *(Пауза.)* Мĕн? Тытмасть? *(Телефон трубкине хурать. Белокопытова.)* Питĕрсе хур ăна сушилкăна, лартăр ирччен. Саланăр! *(Салтаксем саланаççĕ.)*
БЕЛО КОПЫТОВ *(Верьялова.)* Атя. *(Ăна япала типĕтмелли пӳлĕме илсе кĕрет те кăшт тăрсанах тухать.)* Капитан юлташ, вăл тӳнсе кайрĕ. Унăн пуçĕ шăтнă пулмалла.
КАПИТАН. Кутăна перет.
БЕЛОКОПЫТОВ. Ун пек туйăнмасть. Тен лазарета ăсатар?
КАПИТАН. Ăсат, эппин, тулькка сержантпа.

*3 картина. Лазарет. Процедура пӳлĕмĕ: инструментсем хумалли сĕтел, ширма, кушетка. Оксана сĕтел патĕнче тем ĕçлет.*

ТАМАРА САССИ. Киле каясси пулмасть иккен паян. Ăçта атăпа кĕрсе кайрăр?! Хывăр часрах! Кунта сире валли казарма мар.
ВЕРЬЯЛОВ САССИ. Айăплă.
ТАМАРА САССИ. О, хлебак, сана атăпа иртме те юрать. Эс капла та аптрамасть те, фингалсемпе тата чипертерех иккен, чăн-чăн арçын сăнлă. Кил-ха кунта. Сержант, эс кай. Пĕлетĕп, пĕлетĕп... Пар ручкуна. Йĕкĕт, эс процедурнăйне кĕр.
ВЕРЬЯЛОВ *(кĕрет).* Ырă каç пултăр.
ОКСАНА. Эсĕ? Ĕнер калани юрамарĕ, ак паянах кунта лекрĕн. Каламан пулсан сывах юлаттăн. Хытă ыратать-и?
ВЕРЬЯЛОВ. Суран тем мар. Эс юнашар чухне ыратнине туймастăп эпĕ.
ОКСАНА. Эп асамçă мар-çке.
ВЕРЬЯЛОВ. Маншăн тен асамçă.
ОКСАНА. Лар.
ВЕРЬЯЛОВ. Малтан эсĕ лар.
ОКСАНА. Эпĕ чирлĕ мар вĕт.
ВЕРЬЯЛОВ *(кулса илет).* Эпĕ хам ăçтине манса кайрăм пулас.
ОКСАНА. Кампа çапăçрăн?
ВЕРЬЯЛОВ. Хуравламасан юрать-и?
ОКСАНА. Сан ирĕк. *(Питне пăхса.)* Çак суран çеç-и?
ВЕРЬЯЛОВ. Пĕлместĕп.
ОКСАНА. Янаху вырăнтах-и?
ВЕРЬЯЛОВ. Вырăнтах пек.
ОКСАНА. Шăм-шаксем?
ВЕРЬЯЛОВ. Утсах килтĕм.
ОКСАНА. Пӳре?
ВЕРЬЯЛОВ. Тĕкĕнмен.
ОКСАНА. Пуç? Ах, кунта сан юн-çке. Вырт.
ВЕРЬЯЛОВ. Мĕн?
ОКСАНА. Вырт, тетĕп.
ВЕРЬЯЛОВ. Тен кирлĕ мар?
ОКСАНА. Суранпа шӳтлемеççĕ. Вырт, мана ун пек меллĕрех.
Аллусене ак çапла хур. Ан турткалан. Атту кунта салтаксем кăшт перĕнсенех турткаланма пуçлаççĕ.
ВЕРЬЯЛОВ. Уйăхĕ-уйăхĕпе хĕр курманнипе ачашланассисем килеççĕ пуль.
ОКСАНА. Мана уншăн мар пек туйăнать.
ВЕРЬЯЛОВ. Мĕншĕн?

ОКСАНА. Ăшшăн калаçнипе. Эсир вĕт чаçре пĕр-пĕринпе йытăлла. Йытă та вĕт сăнчăрта тăраканни ирĕкре çӳрекеннинчен усалрах. Пирĕн пата килсен вара салтаксем хăйсене кăшт çеç те пулин ирĕкри пек туйса илеççĕ.
ВЕРЬЯЛОВ. Эп нăйккас çук.
ОКСАНА. Мĕн ятлă эсĕ?
ВЕРЬЯЛОВ. Саша.
ОКСАНА. Эпĕ Оксана.
ВЕРЬЯЛОВ. Эпĕ пĕлетĕп.
ОКСАНА. Ăçтан?
ВЕРЬЯЛОВ. Ĕнер столовăйĕнче сан ята асăнакансем чылай пулчĕç.
ОКСАНА. Ан итле вĕсене. Вĕсем пулманнине пулнă пек туса кăтартĕç.
ВЕРЬЯЛОВ. Эпĕ санăн сассуна кăгна тăнлатăп.
ТАМАРА САССИ. Тирпейлĕрех эс! Ăçта тăкатăн?!
ВЕРЬЯЛОВ *(пуçне коридоралла сĕлтсе).* Вăл сан пек мар.
ОКСАНА. Сире алăра тытма кăштах усалраххи те кирлĕ.
ВЕРЬЯЛОВ. Эсĕ вара?
ОКСАНА. Эп ун пек пултараймастăп.
ВЕРЬЯЛОВ. Усал мар, ку чăн, анчах хавасах та мар.
ОКСАНА. Хам çавăн пек эп. *(Пуçне эмеллесе пĕтерсе.)* Пулчĕ те. шăлаварна антар.
ВЕРЬЯЛОВ. Мĕншĕн?
ОКСАНА. Укол туса яратăп.
ВЕРЬЯЛОВ. Тен кирлĕ мар?
ОКСАНА. Уколран хăратăн-и?
ВЕРЬЯЛОВ. Чипер хĕр умĕнче...
ОКСАНА. Манран вăтанатăн-и?
ВЕРЬЯЛОВ. Аван мар пек. *(Шăлаварне салтма пуçлать.)*
ТАМАРА *(кĕрет).* Эс мĕн, йĕкĕт, арçын мар-им? Шăлаварна антарам-ши, антарам мар-ши тесе тăран. Антарсан веçех антар та ăна, тӳрех ĕçе пуçла. Кур, Оксана алли чĕтре пуçланă. *(Ахăлтатса кулса ярать.)*
ОКСАНА. Тамара, тем ан калаç-ха, вăл капла та вăтанать.
ТАМАРА. Вăтанать? Чăнах-и? Çапăçма вăтанман-çке. Кампа çапăçнине пĕлесчĕ сан. Е юну тапмасть-и, салтак? *(Кулса тухса каять.)*
ОКСАНА. Çĕкле çаннуна.

ВЕРЬЧЯЛОВ *(çаннине çĕклет, Оксана ăна хулĕнчен укол тăвать).* Сан аллусем чăн та чĕтреç иккен.
ОКСАНА. Сана туйăнчĕ çеç.
ВЕРЬЯЛОВ. Тавтапуç.
ОКСАНА. Мĕншĕн, ыраттарнăшăн-и?
ВЕРЬЯЛОВ. Пурпĕр тавтапуç.

*Пауза. Верьялов Оксанана чылайччен сăнаса тăрать.*

ОКСАНА. Ан сăна мана.
ВЕРЬЯЛОВ. Эп усал шухăшпа мар, эп киленсе анчах.
ОКСАНА. Киленӳ хаяр. Пылак пулсан та хаярпа юнашар.
ВЕРЬЯЛОВ. Санăн сассу, хусканăву... Ак эс кунтах, юнашарах. Тыт, ачашла, юрат, чупту, сывла санпа пĕр сывлăш антăхса, пăчăртаса лартса юн таппине тăнла. Эсĕ пурри хăйех телейпе тан.
ОКСАНА. Çын çумĕнче ялан тăмасть çав вăл, телей. Тытса тăрас тесен те тухса тарать.
ВЕРЬЯЛОВ. Иккĕн пĕрле чухне тен упраса хăварăпăр ăна?
ОКСАНА. Ку тĕлĕк.
ВЕРЬЯЛОВ. Тĕлĕк мар, ку чăнлăх. Анчах вăл маншăн мар. Ман чăнлăх чĕре тĕпĕнче вут-çулăмпа çунать. Тавăр мана урăхла чăнлăха, пар аллуна.
ОКСАНА. Ĕненес килмест...
ВЕРЬЯЛОВ. Эс ĕнен. Ĕненес килмесен те ĕнен. Çăмăлрах ун пек.
ОКСАНА. Çук, йывăр, пушшех те йывăр. Ма куртăм-ши сана эп пĕреххут.
ВЕРЬЯЛОВ. Ан ӳкĕн, кил çума. Вăй пар.
ОКСАНА. Ан калаç текех, эп пултараймастăп сана итлеме. Эсĕ капла та вăйлă.
ВЕРЬЯЛОВ. Санра ман вăй.
ОКСАНА. Пуç çаврăнать, сывлăш çитмест, каç сулхăнĕ те ӳте витмест. Асамçă хĕр пулнă пулсан сана хам ытамран вĕçертмен те пулăттăм. Тунмастăп, эп хам та сана кĕтнĕ. Аякран пулин те тепре хăть курас тенĕ. Чирлесе пулин те кунта килтĕр тенĕ. Çук, чирлетессишĕн мар, сан çумна сĕртĕнессишĕн. Сĕртĕнтĕм ак, анчах... Анчах хампа эп хуçа мар. Хăратăп эп...
ВЕРЬЯЛОВ. Ма хăрас?

ОКСАНА. Ма тесен... Çук, ан кай! Мĕн хăрани, мĕн вăтанни эс юнашар чухне. Эп тивĕç телее! Пултараймастăп эпĕ тек... *(Верьялова ыталать.)*
ТАМАРА *(кĕрет).* Йăлăхтарчĕç ку сурансем. Оксана, атя-ха. *(Оксана ним чĕнмесĕр тухса каять.)* Мĕн пулнă кунта сирĕн? *(Тухать.)*

*Маттуркин килет, ун питне бинтланă.*

МАТТУРКИН. Эп хăть мĕн тусан та йăнăш тăватăп пулас. Шухăшсем те манăн, хама тĕрĕс шутланă пек туйăнсан та, çынсемшĕн йăнăш. Хам лайăх тăвасшăн, эп тунинче вара ыттисемшĕн ним лайăххи те çук, пачах кутăнла – кам манпа çыхланать, çавна яланах япăх пулать. Мĕншĕн, Верьял?
ВЕРЬЯЛОВ. Урăхла ăнланатăн эсĕ пурнăçа.
МАТТУРКИН. Тен эп мар, тен эсир урăхла ăнланатăр? Тен эп ăнланнă пек йышăнмалла ăна?
ВЕРЬЯЛОВ. Анчах та кунта мар, çарта мар. Сăвап, хисеп, юрату – кашнин ăшĕнчех мар вĕсем. Çавна пулах пăтăрмахсăр кун иртмест те. *(Пауза.)* Вăйлă лекрĕ-и сана?
МАТТУРКИН. Чăтмалла.
ВЕРЬЯЛОВ. Каçар, манăн хамăн чыса та, сирĕн чысăра та вараллаттарас килмест. Çакна ан ман: ыттисене кирлĕ мар пулсан та, аттепе аннене кирлĕ-ха эпир. Вĕсемшĕн хăть киле тĕрĕс-тĕкел таврăнасчĕ.
МАТТУРКИН. Хăçан çитĕ-ши вăл кун?
ВЕРЬЯЛОВ. Вăхăт çитсен.
ТАМАРА *(кĕрет, Маттуркина).* Эс тата мĕн тăван кунта? Кам хушнă сана кунта кĕме?
ВЕРЬЯЛОВ *(Маттуркина).* Тух. *(Маттуркин тухать.)* Оксана ăçта?
ТАМАРА. Унта-ха вăл.
ВЕРЬЯЛОВ. Эс вара?
ТАМАРА. Мĕн эпĕ? Эпĕ санăн умăнта.
ВЕРЬЯЛОВ. Куратăп.
ТАМАРА. Курни çеç çителĕксĕр. Вырт.
ВЕРЬЯЛОВ. Тепĕр укол-и?
ТАМАРА. Çапла.
ВЕРЬЯЛОВ. Вывыртмасан?
ТАМАРА. Эпĕ хушатăп.
ВЕРЬЯЛОВ. Эпĕ Оксана патне.

ТАМАРА. Ёлкёрен. Вырт. *(Верьялова кăкăрĕнчен чышса вырттарать, ыталаса илет.)* Юну таппине лăплантарма ан васка. Çапăçнă чухне кăна мар, ыталанă чухне те хĕрӳ пул.
ВЕРЬЯЛОВ *(хăтăлса).* Çук.
ТАМАРА. Çук? Оксанана куç хыврăн-и? Мĕн турăн эс ăна, халь те лăпланаймасть. Вăл сан валли мар. Шабалина каласа паратăп та, куç хывтарать вăл сана. Е эп Оксанана çитместĕп-и? Е йĕрĕнетĕн манран? Эп кунта сан валли... Тух кутан. Тух, мĕн пăхса тăратăн?! Арçын айĕнче йăваланакан хĕрарăм тетĕн-и? Кирлех пуль эс мана! Тупăннă таса этем. Кай, тек курам мар сана! *(Верьялов тухать, кăшт тăрсан Оксана кĕрет.)* Вĕсене шеллетĕн, пăхатăн, сиплетĕн. Сана кам та пулин шеллинччĕ. Пĕр йĕркеллĕ салтак та çук. Вăйлисем кунта лекмеççĕ те, вĕсене никам та хĕнеймест. Лекес пулсассăн та шăл витменнисем кăна лекеççĕ, катан-катан – катăлмаççĕ.
ОКСАНА. Тамара, ăсат ку ачана госпитале Жора килсе кĕриччен.. Унпа çапăçнă тет вăл, тепри каларĕ. Ăсат ăна.
ТАМАРА. Госпитале ăсатмалăх мар унăн суранĕ.
ОКСАНА. Эппин хам каятăп. Ыран ан кĕт, тепĕр кун та, вăл тухса кайиччченех. Отгулра те, чирленĕ те, хăть те мĕн кала.
ТАМАРА. Мĕн пулнă сана, юратса пăрахрăн-и ăна?
ОКСАНА. Столовăйĕнче курнăранпах.
ТАМАРА. Шабалину пĕлсессĕн иксĕре те вĕлерет вĕт.
ОКСАНА. Пĕлетĕп, çавăнпа хăратăп та. Эпĕ хампа хам хуçа мар. Унра мĕн пурри пĕтĕмпех илĕртет мана. Хама ирĕке ярсассăнах – эп унăн. Пĕлетĕп – ку инкек. Анчах та самантлăх телейшĕн эпĕ ун ытамне кĕрсе ӳкессĕнех туятăп хам сисмесĕрех.
ТАМАРА. Эс пуçна çухатнă. Вăл ыттисенчен нимпе те уйрăлса тăмасть.
ОКСАНА. Ун куçĕсене курасчĕ санăн, вĕсем мĕнле çиçеççĕ.
ТАМАРА. Тупнă хуйхăрмалли. Ар шухăшĕ кĕрсе кайнă та, куçне вылятнă.
ОКСАНА. Çук, уншăн мар. Ун куçĕсем урăхла çиçеççĕ. Хăшпĕр ачасен ăшĕнче мĕн пуррине пĕрре курсах пĕлме пулать. Ун куçĕнче вара пĕр-пĕрчĕ ашкăну, хаярлăх, ултав та çук. Тарăху çеç, тата тунсăх. Çапла-çапла, тунсăх. Мана туртать ун енне.
ТАМАРА. Те лайăх ача-ха вăл? Лайăх ача çапăçса çӳремест ĕнтĕ.
ОКСАНА. Вăл кунта, юнашарах, анчах... Ма çавăн пек-ха пурнăçра: пулас тенĕ çынпа нихçан та пулаймастăн?

ТАМАРА. Мĕнле кун пулчĕ паян? Ĕç пĕтни тахçанах, эпир вара халĕ те кунтан каяймастпăр. Ытлашшине пурпĕр тӳлемеççĕ. Атя часрах.

*Кайма тăраççĕ, вĕсене хирĕç Шабалин кĕрет.*

ШАБАЛИН *(хыпăнса).* Ăçта хлебак?
ТАМАРА. Мĕн, кунта та çапăçасшăн-и? Ротăра çапăçса тăранаймарăн-и? Эп сана асту...
ШАБАЛИН. Ку тарана çитсе мана хамăр батальонра никам та тĕкĕнме хăяйман. Вăл пĕрремĕш мана хирĕç тăчĕ.
ТАМАРА. Лайăхрах ватмалла пулнă, ватсах çитереймен курăнать.
ШАБАЛИН. Шабалина хуçма çăмăл мар*. (Тухма тăрать.)*
ТАМАРА. Çап кăна ăна – тӳрех шăнкăравлатăп. *(Шабалин хыççăн утать.)*
ШАБАЛИН. Тăр ăçта тăран - çавăнта!
ТАМАРА. Эс кута казармăра мар, хуçаланса ан тăр!
ШАБАЛИН. Ан хăра, пĕр-икĕ сăмах çеç калатăп*. (Тухать.)*
ОКСАНА *(хăраса).* Вăл ăна амантать.
ТАМАРА. Леш те хăйне хĕнеттерекенниех мар-ха.
ОКСАНА. Чармалла ăна, атя каятпăр.
ТАМАРА. Чаран ăна! Курмарăн-и мĕнлерех килсе кĕнине?
ОКСАНА. Хăратăп эпĕ.
ТАМАРА. Камшăн, хлебакшăн-и? Хушăн хăра.
ОКСАНА. Шабалин мĕн каласшăн-ши ăна?
ТАМАРА. Шабалин? Эс ăна хушаматран кăна чĕнетĕн пулсан, эппин лешне чăн та юратса пăрахнă.

*Пауза.*

ШАБАЛИН *(кĕрет).* Оксана, ординаторскине атя.
ОКСАНА *(хăраса).* Жора, кирлĕ мар.
ШАБАЛИН. Атя часрах, ман вăхăт сахал.
ОКСАНА. Урăх чухне, Жора, а?
ШАБАЛИН. Çитĕ сана турткаланса. *(Оксанана ярса тытать те хăй хыççăн илсе каять.)*
ОКСАНА САССИ. Жора, туршăн та пулин, шелле мана!
ТАМАРА. Выльăх. Чăн-чăн выльăх. Çавсемпе ĕçлемелле ĕнтĕ пирĕн. Хĕрарăмлăха ăçтан çухатмăн?

ВЕРЬЯЛОВ *(васкаса кĕрет).* Оксана сассиччĕ. Ăçта вăл? Шабалин илсе кайрĕ-и?
ТАМАРА. Ан хутшăн, пурпĕр нимĕн те тăваймастăн.

*Верьялов тухать. Коридортан алăка шакканă, тапнă сасă илтĕнет.*

ВЕРЬЯЛОВ САССИ. Уç алăка! Уç, Шабалин! Ан тĕкĕн ăна, атя иккĕн калаçатпăр. Мана хĕне, ăна ан тĕкĕн. Уç часрах, гоблин! Уç, мартышка! Уç, чмырь! *(Кĕрет.)* Пар уççине, вăл шалтан питĕрсе илнĕ. Пар уççине!
ТАМАРА. Ан хутшăн терĕм сана, хăвна шеллесе калатăп. Вăл пурпĕр Оксанана сана памасть.
ВЕРЬЯЛОВ. Пар уççине, атту çĕмĕретĕп!
ТАМАРА. Çук манра.
ОКСАНА САССИ. Жора, чарăн! Çук, çук! Çу-ук! *(Йĕнĕ сасă.)*
ВЕРЬЯЛОВ. Вĕлеретĕп! *(Чупса тухать, Тамара та ун хыççăн.)*
ТАМАРА САССИ. Мĕн çăварăрсене карса тăратăр?! Марш палатăрсене!
ВЕРЬЯЛОВ САССИ. Вĕлеретĕп эпĕ сана, шабалин! Вĕлеретĕп!!!

*Ӳкнĕ сасă.*

ТАМАРА САССИ. Эй, мĕн пулчĕ сана? Кам та пулин! Пулăш йăтса кĕме.

*Маттуркинпа Тамара Верьялова йăтса кĕрсе кушетка çине вырттараççĕ.*

МАТТУРКИН. Мĕн пулчĕ ăна?
ТАМАРА. Тăнне çухатрĕ пулмалла. Халĕ тух.
МАТТУРКИН. Вăл манăн зема.
ТАМАРА. Тух тенĕ сана! *(Маттуркин тухать, Верьялова итлесе пăхать.)* Чĕри тапать. Эх, эсир те çав, шеллеместĕр хăвăра. Çав териех юрать-и вара?

*Юнашар пӳлĕм алăкĕ уçăлнă сасă илтĕнет, такам атăпа таплаттарса тухса кайни илтĕнет. Кăшт тăрсан Оксана кĕрет, вăл вăйсăр.*

ТАМАРА. Вăл тăнне çухатрĕ.

*Оксана Верьялов патне пырать, ун умне чĕркуçленет те ăна ыталаса илсе йĕрет.*

Мĕн юлчĕ ĕнтĕ халь сирĕн юратуран? Куççуль тумламĕ - çав анчах.

## ИККĔМĔШ ПАЙĔ.

4 картина. Виççĕмĕш картинăри курăну. Кунта Тамара пĕччен. Алăк уçăлать те, шăппăн Верьялов кĕрсе тăрать.

ТАМАРА. Пуçтарăн, сана кăларатпăр. Кĕçех илме килеççĕ.
ВЕРЬЯЛОВ. Оксана ку кунсенче ма пачах килмерĕ?
ТАМАРА. Чирленĕ вăл.
ВЕРЬЯЛОВ. Мана илме кам килет-ши? Офицер çеç ан пултăрччĕ.
ТАМАРА. Эс мĕн, Оксана патне кайма шут тытрăн-и?
ВЕРЬЯЛОВ. Ман ăна курмаллах. Çапăçнă хыççăн мана халь пурпĕр увольнение ямаççĕ.
ТАМАРА. Ман Оксанана, вăл пукане мар. Çапăçсассăн çапăçăр Шабалинпа: пĕр-пĕрне тавăратăр-и унта, каçару ыйтатăр-и, анчах Оксанан пурнăçне ан сĕкĕн. Вăл сан валли мар.
ВЕРЬЯЛОВ. Мĕншĕн ман валли мар? Кам валли вара? Шабалин валли-и? Эп тавăратăп ăна. Хамшăн мар, Оксанашăн тавăратăп.
ТАМАРА. Ăçтан татăлса антăн-ха эсĕ?! Эс пулман пулсан нимĕн те улшăнмасчĕ, веçех ĕлĕкхилле юлатчĕ.
ВЕРЬЯЛОВ. Çакăн хыççăн та-и?
ТАМАРА. Эс аркатаса çеç çӳретĕн. Сан ырлăху - çынсемшĕн инкек. Эс халь ун патне кайса каçару ыйтсан ăна çăмăлрах пулĕ тетĕн-и? Эс ăна тата та пушшех амантса хăваратăн. Вăл вĕт сана... Мĕн усси сиртен! Кунта чухне пукане вырăнне хурса йăвалатăр та, кайран, дембель çитсен, эпир пурри çинчен мансах каятăр. Йăпанма çеç кирлĕ эпир сире. Ытти пĕтĕмпех суя: суя юрату, суя сăмахсем...
ВЕРЬЯЛОВ. Камшăн мĕнле – анчах та маншăн мар. Эс мĕн, хĕрсен çăварĕнчен пĕтĕмпех чăн сăмах тухать тетĕн-и? Эпĕ халь Оксана

пирки мар, сан пирки те мар. Эпĕ урăххи пирки. Салтакчен нихçан уйрăлми çӳретĕн, мĕн тери ăшă сăмахсем илтетĕн. Салтака ăсатнă чухне тата мĕн чухлĕ куççуль, шантару, тупа туни, сансăр пурăнаймастăп тени. Кайран вара çур çултан-и, ытларахран-и çыру илетĕн: «Каçар, эп качча каятăп» тата ытти те...
ТАМАРА. Хăвна хĕрӳ улталанипе пурне те унпа ан танлаштар.
ВЕРЬЯЛОВ. Оксанана столовăйĕнче курсан, унăн сасси мана тӳрех хамăн хĕре аса илтерчĕ. Пулать вĕт пĕрпеклĕх. Тен вăлах мар-ши тесе те шутласа илнĕччĕ. Кайран кăштах калаçрăмăр. Сассинче вара хуйăх, асап. Эп ĕненместĕп хамăн хĕр те лешне юратса качча тухнине. Эп Оксана сассинче ун сассине илтетĕп. Тутасем пĕр сăмах калаççĕ, сасă вара пачах урăххи çинчен калать. Сăмахсем паянхи чăнлăхпа çураçма калаççĕ, сасăра вара ӳкĕтлени, йăлăнни, асап та тарăху. Кайран Шабалин ăна... Тăнсăр пулман пулсан эп ăна ун чухне вĕлереттĕмччĕ те пулĕ.

*Оксана килет, вăл хыпăннă.*

ОКСАНА. Ĕлкĕртĕм иккен.
ТАМАРА. Оксана, ма килтĕн?
ОКСАНА. Ман ăна пĕр сăмах каламалла.
ТАМАРА. Ырăпа вĕçленмест ку сирĕн.
ВЕРЬЯЛОВ. Оксана...
ОКСАНА. Нимĕн те ан кала. Эпĕ туятăп эсĕ мĕн калассине. Мана шеллеме кирлĕ мар. Анчах хам пирки мар манăн сăмах. Эсĕ кĕçех хăвăр ротăна каятăн, унта, паллах, Шабалина курма васкатăн. Эпĕ туятăп сан ăшунта мĕн пулса иртнине. Эс ăна тавăрма шутлатăн.
ВЕРЬЯЛОВ. Ун санпа çавăн пек хăтланмалла марччĕ.
ОКСАНА. Каларăм вĕт. Йăлăнатăп сана, Саша, ан тĕкĕн ăна.
ВЕРЬЯЛОВ. Мĕн?
ОКСАНА. Эсир иксĕр те вăйлă, çав вăхăтрах пĕр-пĕрне кураймастăр. Пĕри теприне парăнтармасăр чарăнмастăр. Жора вара çавăн пек çын... Ун умĕнче нимĕнле чăрмав та пулмалла мар. Эс ытла та тӳрĕ чунлă, пысăк туйăмлă. Унăн хăйĕн тĕрĕслĕхĕ, санăн – хăвăн. Эс ăслă çын-çке: ан тĕкĕн ăна. Эсир иксĕртен пĕри е дисбата лекетĕр, е... Эпĕ хам айăплă,пĕтĕм айăпне хам çине илетĕп. Эпĕ... Эпĕ... *(Йĕрсе ярать.)*
ВЕРЬЯЛОВ. Мĕнре сан айăп, ун алли айне лекнинче-и? Сан айăп çук. Вăл ман хыççăн килчĕ, мана тавăрас тесе. Анчах ĕç

тухманнипе пĕтĕм çиллине сан çинче кăларса ячĕ. Эсĕ халĕ питĕ пăлханнă, сан пуçунта пăтранчăк шухăшсем, çавăнпах ăна каçаратăн та. Анчах та эпĕ каçарма пултараймастăп. Хамшăн тен каçарнă та пулăттăм, анчах та саншăн...
ТАМАРА. Оксана каланă пек ту. Вăл шутламасăр йăлăнмасть сана.
ВЕРЬЯЛОВ. Сана калама çăмăл. Анчах мĕн тунă пулăттăнччĕ-ши эсĕ, енчен те юратнă çыннуна сан умăнтах тепри... усал тусассăн?
ТАМАРА. Самнтлăх çеç ку сан, кайран иртет.
ВЕРЬЯЛОВ. Çук, самантлăх мар, иртес те çук.

Капитан кĕрет.

КАПИТАН. Ак ăçта иккен эсир. *(Верьялова.)* Ну, мĕн, герой, пĕç тăсса выртса çитет пуль сана. Пуçтарăн.
ВЕРЬЯЛОВ. Эпĕ хатĕр.
КАПИТАН. Мана урамра кĕт.
ВЕРЬЯЛОВ. Оксана, тен мана ăсатан?

*Оксанапа Верьялов тухаççĕ.*

КАПИТАН. Оксана мĕн, халь унпа-и?
ТАМАРА. Сана мĕн ĕç? *(Тухасшăн.)*
КАПИТАН *(пӳлсе).* Тăхта! Хальхинче манран тараймăн.
ТАМАРА. Капитан юлташ, эсир хăвăр ăçтине манса кайрăр-и?
КАПИТАН. Çук, манман, анчах та халĕ каласмасăр сана вĕçертместĕп.
ТАМАРА. Мĕн çинчен калаçасшăн вара эсĕ?
КАПИТАН. Хамăр çинчен.
ТАМАРА. Сан çинчен эп каласа памасăрах пĕлетĕп. Е мана сӳтсе явасшăн-и? Эп эрнере миçе арçын айĕнче выртнине пĕлесшĕн-и? Кашни кунах. Кампа – кампа-и? Тĕрлĕ çынсемпе, уйрăммăнах салтаксемпе. Ăçта-и? Ăçта май килет, çавăнта.
КАПИТАН. Çитĕ сана!
ТАМАРА. Е арăму пăрахса кайнипе хĕрарăмшăн тунсăхларăн-и? Эппин эс тĕрĕс адреспах килнĕ. Мĕскер сĕнетĕн? Эп арçын айне ахаль выртманнине эс çынсенчен илтмен-и? Салтаксемпе эп пĕр-пĕрне килентерес шутпа çеç çывăратăп пулсан, офицерсемпе вара хам валли мĕнле те пулин тупăш çăлса илес тесе кăна. Пит пĕлесех тетĕн пулсан, хамăн хваттере те çавна майпа илтĕм. Эс

вара çемьеллĕ пулсан та, общагăра. Эс те хваттер илме пултарнă, ямаллаччĕ те арăмна...
КАПИТАН. Тамара...
ТАМАРА. Ну, мĕн сĕнме пултаран, сĕн. Ах, мансах кайнă, ман пурте пур-çке, мана халь ним те кирлĕ мар.
КАПИТАН. Ан кул манран! Вăрç, хăрт, хĕне, енчен те ку сана лăплантарть пулсассăн. Анчах ан кул.
ТАМАРА. Мĕншĕн кулас мар-ха, енчен те пурнăç кулăшла пулсассăн? Каматăр тен йĕртет те пуль, мана вара култарать çеç. Ма вăрçăнас, ма тарăхас, енчен те пурнăç выляв çеç пулсассăн. Ача чухне – теттесемпе, ӳссе çитсен – пĕр-пĕринпе. Анчах уйрăмлăх пур кунта: теттесем пуш-пушă, этемĕн вара чунĕ пур. Ытла та выляма юратнăран хăш-пĕрисем çав уйрăмлăха туймаççĕ.
КАПИТАН. Эс пĕр шеллемесĕр тавăран мана.
ТАМАРА. Эпĕ? Тен эпĕ мар? Тен эс хăвна ху?
КАПИТАН. Айăплă, пĕлетĕп. Пурнăç выляв пулни те чăнлăхах пулнă тен. Санăн тертӳ вăл самантлăха кăна тăсăлнă ун чух, манăн вара кашни кунах, вунă çул тăршшĕпех.
ТАМАРА. Мĕн калаçан? Мĕнле самантлăх? Эс тата манран кулса тăран?! Çав самантлăха пула эп çынлăха çухатрăм. Сана пула эп пĕтнĕ çын, сана пула хамран хам йĕрĕнетĕп, тен татăлса йĕретĕп те. Çакна пĕлсе сан арăму савăннă, эс вара хăвна тӳрре кăларнă. Юрать-ха ăна качча илмен тесе шутланă. Эс тертленмен, эс савăннă арăмупа пĕрле. Халь кай, ман курас килмест сана.
КАПИТАН. Каçар мана, эп ун чухне йăнăш турăм. Анчах вăл йăнăша тӳрлетме пулать-çке.
ТАМАРА. Çук, тӳрлетме май çук, суранĕ шала кайнă.
КАПИТАН. Çук теме ан васка. Эп манман сана, эп кĕтнĕ çак куна. Арăм та, тен, çавна сиссех-и тухса кайрĕ.
ТАМАРА. Мĕн парать мана вăл кайни? Кай. Иртни таврăнас çук. Е эпĕ хам тухса каятăп.
КАПИТАН. Ан кулян, каятăп. Эп пурпĕрех кĕтеп сана. Тĕл пуличчен. *(Каять.)*

*5 картина. Рота. Кубрик: икĕ хутлă краватьсем, тумбочкасем, тенкелсем. Шабалин килет те, кравать çине тăсăлса выртать. Пуçне çĕклемесĕр чăмăрĕпе минтере тӳнкке, енчен-енне çаврăнса*

*выртать. Кайран алли-урине сарса хускалми выртать. Верьялов килет.*

ВЕРЬЯЛОВ. Тăр. *(Шабалин хускалмасть.)* Тăр, йытă пуçĕ! Кама калаççĕ!!! *(Кравате урипе тапать.)*
ШАБАЛИН. Тап, хытăрах тап. тулькă кравате мар, мана тап.
ВЕРЬЯЛОВ. Тăр. Пăх мана куçран. Куçран пăхса калаç!
ШАБАЛИН. Çап, тап, хĕне ирĕк панă чух, мĕн сăмах вакласа тăратăн? Эс мана хĕнеме килтĕн-çке, ма хĕнеместĕн? Çап тетĕп сана! Çап!!! *(Сасартăк тăрса Верьялова кăкăртан ярса илет, леш ăна пĕтĕм вăйран çапса ярать. Шабалин ӳкет.)* Халь çухал. Çухал ман çул çинчен.
ВЕРЬЯЛОВ. Çук вара, эп ниçта та каймастăп. Эпĕ сана кашни кун ху çынсене мĕн кăтартнине аса илтерсе хăвна çавнах сунса пурăнăп. Çиме ларсассăн та хăсас килекен пултăр хăвăн ĕçӳсене аса илсе. Çывăрма выртсассăн та хăрăшă тĕлĕксем курăнччĕр сана. Манпа тĕл пулмассерен хăвна çын вĕлерекене туйса пурăнмалла пултăр санăн.
ШАБАЛИН. Эп никама та вĕлермен.
ВЕРЬЯЛОВ. Оксанана вара? Маттуркина тата?
ШАБАЛИН. Эп вĕсене вĕлермен.
ВЕРЬЯЛОВ. Ӳт сывви мĕн усси чунĕсем вилĕ чух.
ШАБАЛИН. Куншăн эпĕ çеç мар, эсĕ те айăплă. Енчен те эсĕ ман çул çине тăман пулсан, малтанхиллех пулатчĕ.
ВЕРЬЯЛОВ. Урăхла каласан эс мĕнле тăвас тенĕ, çавăн пек. Курăр-ха мĕнле идеал вăл, пурин те унла пурăнмалла. Кăна пĕтерсе лартмалла, кăна çĕклемелле, кăна мăшкăлламалла, кăна чысламалла. Никам та хăйсемпе хăйсем хуçаланма пултараймаççĕ, пурин те Шабалин шутланă пек пурăнмалла. Мĕншĕн тесен Шабалин вăйлă, Шабалин никамран та хăрамасть, вăл теме те пултарать. Анчах ыйтнă-и эсĕ хăвăнтан: тивĕçлĕ-и эс идеал пулма?
ШАБАЛИН. Эп хама тĕрĕс çын тесе каламарăм.
ВЕРЬЯЛОВ. Анчах çапла шутлатăн.
ШАБАЛИН. Çапла, мĕншĕн тесенссĕн Маттуркин пек пулас килмест, ун пек çынсем хăйсене хăйсем пĕтереççĕ. Çав вăхăтрах сан пек те пулас килмест, мĕншĕн тесен паянхи пурнăç валли мар эс, сан кăшт маларах çуралмалла пулнă. Çавăн чухне тен хăвăн тĕрĕслĕхне çиеле кăларăттăн. Анчах та паянхи кун эс пурне те

чăрмав çеç кӳрен. Тен ху çакна туймастăн та. Эсĕ паллах интеллигентлă çемьере ӳснĕ...

ВЕРЬЯЛОВ. Йĕркеллĕ çын пулма интеллигентлă çемьере ӳсмесессĕн те пулать.

ШАБАЛИН. Ачалăху ытлă-çитлĕ пулнă. Санăн пĕтĕмпех пулнă. Тăрăшнă пулсан эс çартан та хăтăлса юлма пултарнă. Пултарнă-и? *(Верьялов чĕнмест.)* Манăн вара... Ман йăха ĕлĕкхи самана та, хальхи самана та йывăртан йывăртарах çĕре кăна чышать. Ăçта çуклăх, преступлени, хирĕçӳ, çапăçу, танмарлăх - çавăнта эпир. Эп ачаран патак çисе ӳснĕ. Çимеллипе тăхăнмалли пирки ыттисене ăмсанса ӳснĕ. Вара эпĕ кĕрешме пуçларăм, унсăрăн май çукчĕ. Малтан аттерен пуçланчĕ. Пăхса тăрса ӳсĕр аттерен аннене хĕнеттерес килмесчĕ. Алă çĕклерĕм. Алă çĕклесси вара вăл пирвайхи çеç йывăр, кайран каять вара. Алă çĕклесси те, вăрласси те, суясси те... Кайран çара килтĕм, кунта та çав шăпа. Анчах та эп пуça усмарăм, мĕншĕн тесессĕн туятăп хам ăшри вăйа. Мĕншĕн манăн çынран кая пулмалла? Мĕншĕн Оксанăн хăйĕнчен хăй вăтанмалла? Эсĕ мана киревсĕр преступник пек куратăн. Çапла, эпĕ салтак умĕнчи çăкăра туртса илетĕп. Кашни сĕтел çинчен пĕр татăк туртса илнипе вĕсем выçăрах та, тутăрах та пулмаççĕ, сисмеççĕ те вĕсем ăна. Пурне те пĕрле пуçтарсан çеç вăл татăксем нумай пек курăнаççĕ. Эс мĕн, эпĕ вĕсене хамшăн тетĕн-и? Пĕлессӳ килсен, хам валли нимĕн те илмен эп. Тен эрех çеç хăш чух. Ыттине вара камран çак пурнăç пĕтĕмпех тртса илнĕ, çавна тавăрса панă.

ВЕРЬЯЛОВ. Çав вăхăтрах çав çăкăршăн теприне вататăн.

ШАБАЛИН. Çăкăршăн мар эпĕ ăна, кăна эс пит лайăх пĕлетĕн.

ВЕРЬЯЛОВ. Юрĕ, куншăн хăвна тӳрре кăлартăн, анчах Оксанăшăн вара? Е уншăн та хăвна тӳрре кăларăн?

ШАБАЛИН. Оксана – уйрăм çын. Эп айăплă, анчах та кун пек лайăхрах пулать. Эп ăна мăшкăллас тесе мар, эп ăна санран хӳтĕлесе.

ВЕРЬЯЛОВ. Мĕнле абсурд. Тăрлавсăр шухăш. Эс тайăлнă пулĕ ăсран.

ШАБАЛИН. Çапла, санран хӳтĕлесе. Эп ăнланатăп Оксанана, ун туйăмне те. Вăл сана килĕштерсе пăрахнă, тен юратса та-и, пĕлместĕп. Пĕрремĕш кун кăна пĕлместĕп эп ăна. вăл пуçне çухатни куçкĕрет. Ну, юрĕ тейĕпĕр, юраттăр. Эп пăрăнатăп, эсир иксĕр çеç юлатăр. Кун иртĕ, уйăх иртĕ, сана вăл хăйĕн чунне парĕ.

Анчах та эсӗ... Эс ӑна ҫывӑхарах пӗлӗн те сывпул ҫеҫ тейӗн. Вӑл юлӗ хальхинчен пин хыт та аманса. Эс нихӑҫан та ӑнланас ҫук ӑна, мӗншӗн тесен ун пурнӑҫне эс тутанман. Эп вара... Эп ӑна хамран та ытларах пӗлетӗп. Эпир унпа пӗр кимӗ ҫинче. Анчах кимми кӑшт ҫӗрӗкрех, шыв айӗнчи чул лексенех саланса кайма пултарать. Ҫапах та ҫыран хӗррине пурпӗрех пӗрле тухатпӑр. Эпир ишме пӗлетпӗр пӗрле чух.

ВЕРЬЯЛОВ. Эс маншӑн хурав парса ан тӑр. Эс нимӗн те пӗлместӗн ман ҫинчен.

ШАБАЛИН. Эс тӳрӗ те таса ҫын пулма тӑрӑшни хӑйех сана ӑнланма пулӑшать.

*Пауза.*

ВЕРЬЯЛОВ. Ҫавӑн хыҫҫӑн Оксана лазарета пачах пымарӗ. Эс куртӑн-и ӑна ҫак кунсенче?

ШАБАЛИН. Вӑл общагӑра пулнӑ. Эп кайса килтӗм ун патне, анчах та вӑл мана кӗтмерӗ, алӑкне те уҫмарӗ.

ВЕРЬЯЛОВ. Ыттисен умӗнче эс унӑн чысне вараларӑн, мӑшкӑлларӑн, вӑл вара саншӑнах тӑрать. «Ан тив ӑна, ан тив»,- тет. Санах хӳтӗлет вӗт-ха вӑл, санах.

ШАБАЛИН. Тӑлӑх вӑл, детдомра ӳснӗ.

ВЕРЬЯЛОВ. Тӑлӑх? Тӑлӑх пулсан унӑн санран пушшех те аякка тармалла. Вӑл вара... Мӗншӗн вӑл сана хӳтӗлет, мӗнпе илӗртетӗн эс ӑна?

ШАБАЛИН. Вӑйпа.

ВЕРЬЯЛОВ. Вӑйпа? Кӑна эс кӑтартса патӑн ӗнтӗ. Анчах унпа илӗртме май ҫук.

ШАБАЛИН. Илӗртме пулать. Эсӗ те акӑ мана хӑвӑн вӑйупа илӗртетӗн, унтан та ытларах хӑюллӑхпа. Эсӗ вӑйсӑр пулнӑ пулсан эпӗ санпа калаҫмастӑмччӗ те. Пурте манран хӑраҫҫӗ, эс хӑрамарӑн. Вӑй вара мускулсенче кӑна мар, пуҫра та. Мӗн чухлӗ эсӗ мана хирӗҫ тӑратӑн, ҫавӑн чухлӗ эпӗ сан енне туртӑнатӑп. Ҫук, сана пӗтерсе лартас шутпа мар. Ҫав вӑхӑтрах хама пӗтерсе лартма та паман пулӑттӑм. Каҫар та, мӗн ятлӑ эсӗ? Эпӗ сана хушаматран кӑна пӗлетӗп.

ВЕРЬЯЛОВ. Саша.

ШАБАЛИН. Эпӗ Жора. Саша, кала мана пӗр тунмасӑр: килӗшет-и сана Оксана?

ВЕРЬЯЛОВ. Ыйтатăн та.

ШАБАЛИН. Курни-илтни çинчен манса, айăпсем çинчен шутламасăр: килĕшет-и вăл сана?

ВЕРЬЯЛОВ. Пĕр тунмасăр тетĕн? Пĕр тунмасăр! Килĕшет. Анчах халь тин мĕн вăл мана килĕшни?!

ШАБАЛИН. Дембель çитсен илсе кай ăна хупа пĕрле.

ВЕРЬЯЛОВ. Мĕн? Мĕн терĕн эс?

ШАБАЛИН. Ман ăна телейлĕ тăвас килет. Кунта юлсан вара вăл пĕтет, пĕтерессĕ ăна. Кунта малтан ун çумне нумайăн çипçăнатчĕç. Эпĕ вара ăна пуринчен те туртса илтĕм. Патак та çирĕм, чĕп-чĕрĕ юн та таврăнкаларăм, самоволкашăн губара та лартăм. Çапах та эпĕ хамăн тĕллеве пурнăçларăм: хăтартăм эп ăна ыттисенчен. Вăл манпа çеç юлчĕ. Халь ăна сана паратăп. Илсе каятăн-и? Вăл вараланчăк – чăн сăмах, анчах чунĕ таса. Мĕнле пур, çавăн пек йышăнма пултаратăн-и эсĕ ăна? Сăмах пар та вара эп ун патне тек нихçан та каймăп. Эпĕ хам та илсе кайăттăм, юрататăп та эпĕ ăна, анчах телейлĕ тăваймастăп. Усал эпĕ, хĕрсе кайсассăн хама хам та тытса чараймастăп, мĕн туса хурассине те пĕлместĕп. Пит урса кайсан вĕлерсе пăрахма та пултаратăп. Ăна вара лăпкă пурнăç кирлĕ, усаллăха вăл детдомра та пайтах курнă, кунта та. Ну, мĕн тăвайăн, хăйне хăй хӳтĕлеймест. Хальхинче те акă эп ăна юратнă çынни умĕнче мăшкăлларăм. Тата эс лере алăка çĕмĕретĕн, кăшкăратăн. Вăл вара... Ун куçĕсене курасчĕ сан çав вăхăтра, ун ăшĕнчен тухакан сасса тăнласчĕ! Эпĕ ăна ăнланатăп, унпа ачаш пулмалла, анчах та эпĕ... Хам мĕн тунине аса илсен эп хам та чĕтрене еретĕп. Эпĕ ăна мăшкăллатăп, вăл вара выртать ним тăваймасăр. Куçĕсенчен тин касса янă çурхи хурăн евĕр куççуль юхать. Вăл куççульсем эп мăшкăлланăран мар, хăйне сана валли упрайманран юхрĕç. Илсе кай ăна. Сăмах пар та ĕмĕр упрама, илсе кай. *(Пауза.)* Чĕнместĕн? Тен иккĕленетĕн? Тен «килĕшет» тени те сăмах çеç? Килĕшме мар, тен йĕрĕнетĕн те унран?

ВЕРЬЯЛОВ. Чарăн!

ШАБАЛИН. Иккĕленекен çынна вара памастăп эп ăна. Пĕтсессĕн пĕттĕр хампа пĕрле, телей курма çырнă пулсан, телей те курăпăр пĕрле. Анчах сана памастăп! *(Тухса каять.)*

*6 картина. Виççĕмĕш картинари курăну. Тамара тем ĕçлет. Оксана кĕрет.*

ТАМАРА. Ăçта кайнăччĕ эсĕ?
ОКСАНА. Рапорт çыртăм.
ТАМАРА. Ухмах, эппин. Ху çине ху алă çĕклени çеç ку.
ОКСАНА. Эп урăхла пултараймастăп.
ТАМАРА. Рапорт çырнă вăл. Мĕн парать ку сана, çăмăллăх-и? Эс хăвна тата та ытларах йывăрлăха чикетĕн.
ОКСАНА. Антив йывăр пултăр, антив нушаланам. Халиччен телей курманнине малашне пурĕпĕр курас çук.
ТАМАРА. Веçех çав хлебак айăплă. Йăтăнса анчĕ таçтан сан пуçу çине. Ырă тăвать иккен вăл... Ун ырлăхĕ сана ура хурать.
ОКСАНА. Хам ĕмĕрте пĕртен пĕрре чăн-чăн юратса куртăм. Анчах юрату техĕмне туяс чухне ман тармалла пулчĕ унран. Йĕри –тавра усаллăх, тасамарлăх, вĕсен хущшинче вара таса та йăлтăркка куçсем. Вĕсенче çăлăнăç, анчах та маншăн мар. Общежитинчи пӳлĕмшĕн çакăнта килсе кĕтĕм, килсе кĕтĕм те... *(Йĕрет.)*
ТАМАРА. Çитĕ, чарăн. Тупнă йĕмелли. Ар шухăшĕ кĕрсе кайнă та, куçĕсене вылятнă.
ОКСАНА. Çук, вăл урăхла.
ТАМАРА. Е хăйĕн юратнă хĕрне санра курнипе. Паллах çавăншăн., тата мĕншĕн пултăр-ха. Юратнă хĕр сассине Оксана сассинче илтрĕм тесе вăл хăй те каларĕ. Калаçма санпа калаçать, шухăшĕсем вара теприн çинче. Юрату мар ку, ултав анчах. Халь сан пуçна çавăрать, дембель çитет те пăрахса каfive.
ОКСАНА. Ултав анчах пулнă пулсан тен çăмăлрах та пулĕччĕ мана. Ун чухне çак мăшкăлшăн, çакăн пек хĕр пулнăшăн тен вăтанман та пулăттăм. Анчах та ултав мар ку, юрату.
ТАМАРА. Хăть те мĕн чухлĕ юрат, хăть те кама юрат, сана валли мар вăл юрату. Жора сана пурпĕр вĕçертмест., вĕçертсессĕн те тавăрать. Вăт унăн – юрату, кăна эп ĕненетĕп. Антив урăхла пултăр, ыттисенни пек мар, анчах та ĕмĕрлĕхе. Эс теприне юратнине те, вараланчăк пулнине те пăхмасть, юратать. Мĕнле пур, çавăн пеккине юратать. Ахалех рапорт çырнă эсĕ, Жорана тĕрмене лартса эс унран хăтăлаймастăн.
ОКСАНА. Пĕлетĕп, çавăнпах каятăп та кунтан. Ун çине рапорт çырман эп, хам çине çыртăм кунтан кайма.
ТАМАРА. Кайма? Ăçта?

ОКСАНА. Пĕлместĕп ăçтине. Хăть те ăçта, кунтан çеç аякка.
ТАМАРА. Камран таратăн? Жора сана хăть те ăçтан та тупать, кăна эс пит лайăх пĕлетĕн. Тен хлебакран? Унран пулсан васка часрах. Анчах та эс унарн тармастăн. Çук, унран мар, манран таратăн. Кала, манран-и? Кала!
ОКСАНА. Мĕн калаçатăн? Ма тарас манăн санран?
ТАМАРА. Эс хăвăн шăпу çакăн пек пулса тухнăшăн мана айăплатăн. Жорашăн та, ыттисемшĕн те...
ОКСАНА. Çук!
ТАМАРА. Шутлатăн пуль-ха: енчен те эсĕ çакăн пек хĕр пулман пулсан, ман çума та никам та çулăхас çукчĕ тесе. Эс вĕсене май туса патăн тесе. Арçын ачасенчен тарса та мар, мăшкăл курнăшăн та мар, манран таратăн эсĕ.
ОКСАНА. Чарăн! Эс маншăн аппа вырăнĕнче.
ТАМАРА. Анчах та сан тивĕç çук мана айăплама! Мĕнле пулас тетĕп, çавăн пек пулатăп. Никам ан хăйтăр мана сӳтсе явма! Эп сана та, вĕсене те хĕтĕртмен. Эсĕ вĕсене ху та сирсе яма пултарнă. Кунта çар: комбата каласа паратăп тесе хăрат та, сана никам та тĕкĕнмест. Ан хăй мана айăплама! Ан хăй!
ОКСАНА. Сана айăпламастăп эпĕ, хама айăплатăп.
ТАМАРА. Тен эпĕ çав арçын ачасене пула çеç çак çĕр çинче пурăнатăп. Тен çав хĕршĕн антăхнă каччăсем пулман пулсан, эп тахçанах вилсе выртмалла. Тен çав ачашлăх, йăпану – ман пурнăç шăнăрĕ. Тен урăхла телей те çук ман. Тен эп тахçанах хама приговор çырнă. Эс вара мана айăплатăн. *(Йĕрет.)*
ОКСАНА. Ман вырăнта пулса курасчĕ сан.
ТАМАРА. Мĕн тума ман сан вырăнта пулмалла тет? Эпĕ вунă çул каяллах сан вырăнта пулнă. Мĕн, эпĕ яланах çакăн пек хĕр пулнă тетĕн-и? Юратăва тивĕçлĕ хĕр пулман та тетĕн-и? Эпĕ те юратнă, мана та юратнă. Хальхи ăс пулсассăнччĕ! Туртса илчĕç ман Моисейа. Сан вырăнта ĕçлекен хĕр-тус çавăрса илчĕ, эпир пĕрле çӳренине пĕлсе тăрсах. Леш вара йĕксĕк, чăтăмсăр арçын... Вĕсен туй кунне эп вилес тесеччĕ. Анчах те хăйĕн шухăшĕпе, те эп йĕнине илтсе пĕр салтак кĕчĕ те çакăнта, сирчĕ усал шухăша. Юриех хама ирĕке ятăм. Вăл унта тепринпе пулсан, ма манăн урăххипе пулмалла мар? Вара пуçланчĕ пĕрре, тепре, унтан татах, татах, татах... Халь, ав, амрăмĕ пăрахса кайнă та, каллех ман хыççăн çӳрет. Ун чухнехи таса Тамара кирлĕ пулмарĕ, хальхи Тамара кирлĕ пулчĕ ăна. Эп вара ăна малтан юратнă пулсан, халь

пултараймастăп. Сивĕннĕ чĕре, шалта пуш-пушă. Нĕрсĕр, ирсĕр хĕр эп. Телейсĕрсем эпир санпа. *(Ыталанса йĕреççĕ.)*
ШАБАЛИН *(кĕрет).* Тинех.
ТАМАРА. Ак çитрĕ сан.
ШАБАЛИН. Пĕр-пĕринчен пытанса çитет пуль, Оксана. Тамара, тух.
ТАМАРА. Хуçаланса ан тăр кунта. Ху тух та кай.
ШАБАЛИН. Ман унпа хăйĕнпе çеç калаçмалла.
ОКСАНА. Ман калаçас килмест санпа.
ШАБАЛИН. Санăн мана каламалли нумай. Эс ылханатăн, тăвăлатăн, вăрçатăн тем те каласа, анчах хăв ăшунта. Хăв ăшунта тытса тăриччен, кăларса яр пĕтĕмпех ман çине. Ак эпĕ сан умра. Вăрç, хăрт, хĕне, вĕлер, эп чармап хăть мĕн тусан та.
ТАМАРА. Ма килтĕн эс кунта, Оксанана шăтăка чикме-и?
ШАБАЛИН. Пĕлетĕп, эпĕ айăплă. Сирĕн шутпа эпĕ киревсĕр пултăм. Анчах та урăхла пултарайман эп, мĕншĕн тесен сана юратнă, юрататăп та. Эсĕ вара хлебака пула манран кашни кунах аякка тарса пыратăн. Эс ак-ак ун ытамне кĕрсе ӳкеслеччĕ. Манăн вара сана вĕçертес килмесчĕ. Эп сансăр пурăнаймап, Оксана.
ТАМАРА. Эгоист эс.
ШАБАЛИН. Кам хăйшĕн тăрăшмасть? Эсĕ-и? Верьял-и? Вăл пĕлсе тăрсах пирĕн хушша кĕчĕ, Оксанана илĕртме пуçларĕ – ку эгоизм мар-и? Анчах хушша тăчĕ пулсассăн, тăтăр çирĕп. Савать пулсассăн савтăр ниме пăхмасăр. Тен савмасть те, вăл иккĕленӳллĕ. Халь пĕтĕмпех пĕлчĕ. Халь савтăр ак. Эс хăвалатăнах пулсан, эп пăрăнатăп, тек нихçан та килмĕп. Кала куçран пăхса юлашкинчен: каяс-и е юлас?
ОКСАНА. Эп шаннăччĕ сана. Эсĕ мана нумай пулăшрăн, мăшкăл курасран та хăтартăн сахал мар. Сан хӳттӳнте эпĕ хама вăйлăрах туяттăм. Эс çук чухне саншăн тунсăхлаттăмччĕ те. Паллах юрату çукчĕ, анчах шанчăк пурччĕ. Пурăна киле тен юратăп теттĕм. Эсĕ мана чи çывăх вырăна хураттăн, упраттăн. Таса маррине пĕлсе те, чи таса хĕр вырăнĕнчеччĕ эпĕ саншăн. Ху вара... Нихăçан та шутламанччĕ эсĕ мана...
ШАБАЛИН. Каçар мана, юратнăран эп...
ОКСАНА. Кай, Жора, кай та тек ан кил. Çакăнпа вĕçленчĕ, пĕтĕмпех вĕçленчĕ. Халь тин мана никам та кирлĕ мар.
ШАБАЛИН. Çук, ан кала ун пек. Эп усал та ирсĕр пулсан та, пĕтмен-ха халлĕхе. Тен халь пушшех те эпĕ урăх, паллами урăх.

Пулсам ман арӑм. Пирӗн ача ҫуралӗ, телей те пулӗ, тен юрату та пурӑна киле.
ОКСАНА. Халь тин мӗн телейӗ? Туртса илтӗн эсӗ ӑна. Эп сана мар, ӑна саватӑп. Халь вара пурнӑҫ тӗллевӗ йӑлт ҫухалчӗ. Халь манӑн пурӑнас килмест. Сана пула ку пӗтӗмпех. Веҫех таптарӑн, ватрӑн, кӗллентертӗн. Ӳт кӑна юлчӗ, ил ӑна та, мӗне тӑрать сана.. *(Скальпель сӗнет.)* Ну?!
ШАБАЛИН *(скальпельне туртса илет).* Кӳр кунта. Вӑл тетте мар. Сансӑр эпӗ нимсӗр. Антив пултӑр, эп чӑтатӑп. Ман телейе туртса илтӗн тени вара мана урлах касать. Эп пӑрӑнатӑп, анчах та тӳрех мар. Сан телейӳ маншӑн хамӑннинчен те хаклӑрах. Кала мана: мӗн туртса илнине каялла тавӑрса пама хал ҫитерсен, каҫарнӑ пулӑттӑнччӗ-и эсӗ мана?
ОКСАНА. Эс турӑ мар.
ШАБАЛИН. Шуйттан та мар. Эп ҫын. Чун тасалӑхӗшӗн, чӑнлӑхшӑн, йӗркешӗн, чи ырӑ туйӑмшӑн антӑхнӑ ҫын. Тен вӗсене эпӗ хам пек ӑнланса хам пек татса паратӑп пулӗ, анчах та паянтан сан пек те ӑнланма хевте ҫитерӗп. Кӗт мана, ан кай ниҫта та. *(Тухса каять.)*

*7 картина. Рота. Кубрик. Каҫ. Салтаксем ҫывӑраҫҫӗ.*

ВЕРЬЯЛОВ САССИ. Мӗн, офигел наряд, да? Ма тумбочка ҫинче ҫывӑратӑн? Дежурныӗ ӑҫта?
БЕГУНОВ *(койка ҫинчен пуҫне ҫӗклесе).* Кам? Верьял, эс-и?
ВЕРЬЯЛОВ *(килет, ун аллинче эрех кӗленчи).* Эс ма нарядра ҫывӑратӑн? Дежурный ҫывӑрать, дневальный ҫывӑрать, оружейкӑра вара пӗр автомат юлман.
БЕГУНОВ. Верьял, эс мӗн, ӳсӗр-и?
ВЕРЬЯЛОВ. А мӗн, килӗшместӗп-и? Эсир мана ҫакӑнпекскере курасшӑн вӗт. Халь вара килӗшместӗп-и? Унчченхи Верьял сире килӗшмест, хальхи Верьял килӗшмест. Мӗнле Верьял килӗшет вара сире? Санран ыйтатӑп, кӗҫӗн сержант! *(Бегунова ҫухаран ярса тытать.)*
БЕГУНОВ *(Верьялов аллине сирсе).* Ну-ну, тирпейлӗре. Атту мӗнле тӑсса хуратӑп... Вырт кайса, ротный килме пултарать, дежурный вӑл паян.
ВЕРЬЯЛОВ. Пӗлетӗп. Пыр халь ун патне кайса каласа пар Верьялов ӳсӗр тесе, шакка кайса. Саншӑн шӑп меллӗ самант. Эс

вĕт çак куна кĕтнĕ, мана хлеборезкăран кăлармиалли меллĕ саманта. Ак çитрĕ вăл. Ротныйа шаккаса парасси кăна юлчĕ. Мĕн тăратăн? Элекле кайса.
БЕГУНОВ. Ан хăй мана ун пек калама, эп стукач мар. Сана унтан кăларма эп урăхла май та тупатăп. Вырт кĕрсе часрах.
ВЕРЬЯЛОВ. Эп вĕт сире пурне те кансĕрлетĕп, чăрмантаратăп, эп пурне те сиен кӳрекен çын. Тăрат дедсене.
БЕГУНОВ. Сана лазаретра йăнăш укол туса яман-и?
ВЕРЬЯЛОВ. Дневальный, кăшкăр дедсем тăрăр тесе.
БЕГУНОВ. Сан хăшпĕр тĕлте кĕçтет пулмалла*. (Верьялова ярса илет.)*
ВЕРЬЯЛОВ. Кĕреплӳсене пуçтар. *(Бегунов аллисене илет.)* Тата çемçен калаç манпа. Паян манпа çемçен калаçмалла, унсăрăн хăшпĕрне вĕлерме пуçлатăп. Шабалин ăçта?!
ДАНИЛОВ *(пуçне çĕклесе).* Санек, мĕн пулнă сана паян?
ВЕРЬЯЛОВ. Эс çывăр.
БЕЛОКОПЫТОВ *(тăрса).* Сассу кăна пĕтсе ларасчĕ сан. Мĕнле лайăх тĕлĕке курма памарĕ. Юратнă хĕр çумĕнче выртаттăм вĕт, патне кăна çитнĕччĕ, эсĕ пур...

*Салтаксем кулса илеççĕ.*

МУСТАФА *(пуçне çĕклесе).* Калатып çав кроват чириклетрĕ тесе.
БЕГУНОВ. Йĕпетмен-и эс унта? Трусыне улăштар.
МУСТАФА. Сиржант юлташ, кравать айĕнче кӳлĕ кунта.
БЕГУНОВ. Çулталăк планне тултартăн пулĕ апла. *(Салтаксем кулаççĕ.)* Ну-ка шăп! Кам хушнă сире кулма? Çывăрăр! Отбой!
ВЕРЬЯЛОВ (эрех кĕленчине пукан çине лпртса). Кил, хуйхуна пусар.
БЕЛО КОПЫТОВ *(шăхăрса).* Верьял, эсех-и ку?
БЕГУНОВ. Верьял, эс мĕн? Пуçтар часрах.
ВЕРЬЯЛОВ. Эс илсе килмен, эс ĕçтерместĕн.
БЕГУНОВ. Губашăн тунсăхланă пулас эс.
ВЕРЬЯЛОВ. Сан мĕн хăрамалли? Хупсассăн та мана хупаççĕ.
БЕГУНОВ. Эй, духсем, кам хушнă сире пуçăрсене çĕклеме? Çывăрăр! Отбой!
БЕЛОКОПЫТОВ. Атя ярар-ха пĕрер, тарăхни иртсе кайтăр хăть.
БЕГУНОВ. Чăнах та хăналатăн-и?

ВЕРЬЯЛОВ. Лар, паян паллă кун. Паян сирĕн уяв. Паян çĕнтерӳ кунĕ.
БЕГУНОВ. Чăнах тайăлнă, ĕçме юрамасть иккен ăна.
БЕЛОКОПЫТОВ. Çĕнтерӳ кунĕ, тетĕн? Кам кама?
ВЕРЬЯЛОВ. Ан васка, лар. Эс те лар.
БЕГУНОВ. Лектеретĕн-ха эсĕ мана паян хупа пĕрле.
БЕЛОКОПЫТОВ. Чим, Бегунок, лар, вăл интереслĕ калаçу пуçларĕ. Кун пек салтак эп халиччен курман.
БЕГУНОВ. Духсем. *(Никам та чĕнмест.)* Духсем!
САСĂСЕМ. Эпир...
БЕГУНОВ. Эсир курман-илтмен, ăнлантăр-и?
САСĂСЕМ. Ăнлантăмăр.
БЕГУНОВ. Халь кру-гом! *(Койкасем чĕриклетеççĕ.)* Халь паппа тăвăр. Салтак çывăрать, служба иртет. Ну-с, çĕнтерӳ кунĕ тетĕн?
ВЕРЬЯЛОВ. Сирĕн ротăна куçнăранпа эпĕ нумай шутларăм, нумай куртăм. Вара çакна туйса илтĕм: эп халиччен мĕнле пулнă, çавăн пек пулмалла мар, улшăнмалла.
БЕГУНОВ. Эс урăхла пултарайман, ку вăл малтанах паллăччĕ.
ВЕРЬЯЛОВ. Манăн ку шухăша хамăн ăша илес килмесчĕ, лĕклентерет вăл мана, анчах урăхла май çук. Эпĕ хама хам çĕнтертĕм, эпĕ халĕ сирĕн йышăрта. Малашне сирĕн пекех хам пек шутламаннисене пĕтерсе лартăп, айваннисене пусмăрлăп, мăшкăллăп шелсĕр, ирсĕр мĕнпе вĕçленни çинчен шутламасăр. Хăшпĕр ăссăр офицерсен ăссăр шухăшĕсене пурнăçлас тесе те тăрăшăп. Мĕн мана ыттисем, эп хам кăна чи тивĕçли, чи тĕрĕсси, чи чунли. Эп çеç этемлĕхĕн чи çӳллĕ шайĕнчи этемĕ. Ыттисем вара – ниме тăман çынсем. Çынсем те мар, япаласем анчах. Япалапа вара хăть те мĕн тума пулать.
БЕЛОКОПЫТОВ. Кунта çар, çрата вара пурте уставпа тăлланнă. Кăна эс ху та пит лайăх пĕлетĕн. Чун йышăнман япаласем пайтах кунта.
ВЕРЬЯЛОВ. Кам маншăн Маттуркин? Чи япăх çын, урăхла чмо. Антив вăл манран темиçе хут ăслăрах пултăр, эпĕ вара пурпĕрех столовăйĕнче вăл çиес татăка туртса илетĕп те кайран ăнах çăкăр вăрланăшăн ислетĕп. Кам маншăн Данилов? Вăл та чмо. Мĕншĕн тесессĕн урăхла шутлать, эппин лăскамалла. Кам маншăн Оксана? Юхха хĕр. Антив мана пула çапла пултăр вăл. Хăй айăплă, хирĕçлемелле пулнă. Антив хирĕçленĕ пултăр, кăшкăрмалла, пулăшу ыйтмалла пулнă. Антив кăшкăрнă пултăр, хăтăлма май

тупмалла пулнӑ. Эпӗ паллах ямастӑп: ман хамӑн тӗллев, тӑсса хурса унпа киленесси. Антив вӑл мӑшкӑл куртӑр, мана мӗн ӗҫ, ун вырӑнне эпӗ телейлӗ.

БЕГУНОВ. Чарӑн, пӗрремӗш эп пулман!

ВЕРЬЯЛОВ. Пӗрремӗшӗнче-и ӗҫ? Ӗҫ чунсӑр пулнинче.

БЕГУНОВ. Таса пулса юлас килнӗ пулсан, килмелле пулман кунта. Вӑл хӑй ӑҫта лекессине пит лайӑх пӗлнӗ. Килнӗ пулсан - ҫемҫешке ан пултӑр.

БЕЛОКОПЫТОВ. Офицерсем пирки эсӗ мана тӗртсе каларӑн-и?

ВЕРЬЯЛОВ. Тавҫӑрнӑ пулсан ма ыйтатӑн?

БЕЛОКОПЫТОВ. Йӑнӑшатӑн эсӗ.

ВЕРЬЯЛОВ. Ҫук, ҫавӑнпа эс ху сӑмах хускатрӑн та, мӗншӗн тесен сан чӗре тӗпне тӑрмалаканни пур. Данилова дневальный тӑратрӑн, ҫӑкӑр илме ятӑн, Маттуркина х-б ҫутарассине те эсӗ йӗркелерӗн.

БЕЛОКОПЫТОВ. Ун пек тӗслӗхсем кунта кашни кун пулса иртеҫҫӗ.

ВЕРЬЯЛОВ. Веҫех йӗркеллӗ ҫиелтен пӑхсан, ахаль куҫа нимӗн те курӑнмасть. Мӗн те пулин пулсан, Белокопытов тап-таса. Ӑслӑ эсӗ, нимӗн те калаймӑн, Моисей хушнине лайӑх пурнӑҫлатӑн. Моисей Верьялова хуҫма хӑй умне тӗллев лартнӑ, эсӗ ҫав куна ҫывхартса пыратӑн та. *(Кубрикелле.)* Эс мар, вӗсем чӑн этемсем. Эсир ҫынлӑхӑра ҫухатнӑ, ӑс-тӑнӑра сутнӑ этем пурнӑҫӗпе пурӑнакан суя ҫынсем.

БЕГУНОВ. Унччен сахал лекрӗ пулас сана, вӑйлӑрах ислетмелле пулнӑ.

БЕЛОКОПЫТОВ. Эс кунта пире ҫынлӑха, ӑс-тӑна ҫухатнӑ тетӗн. Сан шутупа эпир ӑна туймастпӑр? Пире ыраттармасть ҫак шухӑш? Ҫавӑнпа хӑш чух тарӑхнине *(Кӑкӑрне шаккать.)* ҫакӑнта усрас мар тесе вӗсем ҫине кӑларса яратпӑр та. Ҫарта никамӑн та ҫӑмӑл пурнӑҫ мар. Эс нихӑҫан та шутламан-и Моисей сан ҫине ма тӑрӑннӑ пирки? Е мантӑн-и пӗррехинче ун аллине мӗнлерех пӑрса лартнине? Эп лайӑх астӑватӑп, юнашар тӑраттӑм. Ӑсатрӑн та эсӗ ӑна вирлӗн кӑна виҫ хутлипе...

ВЕРЬЯЛОВ. Эпӗ ун чух хӗртен ҫыру илнӗччӗ, кӑмӑл ҫав тери хуҫӑкчӗ. Тата ҫитменнине вӑл... Эп ӑшра кӑна каласшӑнччӗ, ман сасӑпах тухрӗ.

БЕЛОКОПЫТОВ. Эсӗ салтак, вӑл офицер. Вӑт унӑн кӑмӑлне эс чӑн та хуҫрӑн.

ВЕРЬЯЛОВ. Эп каҫару ыйтрӑм унран.

БЕЛОКОПЫТОВ. Мĕн эс каçарттарни. Çавăн хыççăн ăна комбат кашни утăмĕнчех ура хурать, капитанран çӳле те хăпартмасть. Ăна памалли хваттере те начфина панă, ав. Çитменнине арăмĕ те пăрахса кайнă. Тĕрĕссипе сана айăпламаллаччĕ, комбат вара ăна сан çине алă çĕкленĕшĕн айăплать. Мĕншĕн тесессĕн унăн хăйĕн тĕллев пур. Халĕ те-ха сана юри лартман вăл хлеборезкăна. Çук, çĕнтерӳ мар ку санăн. Эс пиртен ним чух та лайăх мар, тен япăхрах та.
ВЕРЬЯЛОВ. Эп сирĕн пек чуна сутман. Сан паллах часрах дембеле каяс килет. Çав куна пурнăçлас тесе манарн пуçларăн. Ыран ак Моисей хушсан, ун çине куçатăн. *(Бегунов çине тĕллет.)*
БЕЛОКОПЫТОВ. Пăчлан!
ВЕРЬЯЛОВ. Эс ун тĕллевне пурнăçлакан, хуçине итлекен, йăпăлтатма пултаракан шанчăклă йытти.
БЕЛОКОПЫТОВ. Мĕн? Эп сана куншăн... *(Верьялова ярса илет.)*
БЕГУНОВ. Турра кĕлту, Верьял. *(Верьялова çапса ярать.)*
БЕЛО КОПЫТОВ *(Бегунова).* Пăрăн кунтан, эп хамах. Вăл мана кӳрентерчĕ, йытăпа танлаштарчĕ, духсем умĕнче намăс кăтартрĕ.

*Васкаса Шабалин килет.*

ШАБАЛИН *(чарса).* Все, çитĕ, çитĕ! Чарăнăр!
БЕЛОКОПЫТОВ. Кай, Жора, вĕлеретĕп эп ăна.
ШАБАЛИН. Лăплан! Никам та ан хăйнă пултăр ăна тĕкĕнме. Никам та! Тĕкĕнсен хăвăра начар пулать.
БЕЛОКОПЫТОВ. Вăл пире йытăсемпе танлаштарчĕ.
ШАБАЛИН. Тен тĕрĕс те, тен пурте йытăсем эпир. Тен çавна пулах тараççĕ те пиртен çынсем. *(Верьялова.)* Атя, халь эс манпа пыратăн.
ВЕРЬЯЛОВ. Кай кунтан, ниçта та каймастăп эп санпа.
ШАБАЛИН. Эсĕ мана пĕлместĕн-ха. Пĕлсессĕн урăхла калаçăн. Атя!
ВЕРЬЯЛОВ. Хăп ман çумран!
ШАБАЛИН. Часрах, ман вăхăт сахал.

*Шабалинпа Верьялов турткаланаççĕ, капитан килет.*

КАПИТАН. Мĕне пĕлтерет ку? Ма çывăрмастăр? Ах, кунта ĕçкĕ. кам илсе килчĕ? *(Верьялова.)* Эс ӳсĕр? Эс илсе килтĕн-и?

ВЕРЬЯЛОВ. Эпĕ.
БЕГУНОВ. Капитан юлташ, эпир ĕçмен. Вăл пĕччен çеç таçтан ӳсĕр килчĕ те...
КАПИТАН. Ну, тинех... Иртнинче манран хăтăлтăн, халĕ вара эсĕ манăн алăра. Мĕн тăвас тетĕп, çавна тăватăп.
ШАБАЛИН. Капитан юлташ, вăл айăплă мар.
КАПИТАН. Паçăртанпах чаçре çук, халь акă ӳсĕр...
ШАБАЛИН. Вăл мар, ӳсĕррисем эпир, ĕçмесĕр ӳсĕр. Вăл чи урри кунта.
КАПИТАН. Эс те ӳсĕр. Çитет сана та иртĕхсе: кашни кун самоволкăра, кашни кун майрапа. Пĕрин патĕнче, теприн патĕнче. Салтак апатне сута-сута...
ШАБАЛИН. Шăлăра çыртасчĕ. Эп мар салтак апатне сутаканни, эсир. Пĕр вăтанмасăр, тăранмасăр, пирĕн куç умĕнчех. Ак мейĕр, ку сирĕн укçăр. *(Укçасем кăларса ывăтать.)* Тăранăр! Атя тата та хушăр, тата мĕн чухлĕ сутмалла. Складра салтак çимĕçĕсем нумай-ха.
КАПИТАН. Чарăн! Халех иксĕр те губана каятăр. Белокопытов, хывса ил вĕсен пиçиххийĕсене. *(Белокопытов хускалмасть.)* Эс мĕн, илтмерĕн-и?
ШАБАЛИН. Эп сирĕнпе ниçта та каймастăп, вăл та каймасть.
КАПИТАН. Тата нумай калаçса тăрасшăн-и-ха эсĕ?! *(Пиçиххине хывса илме тăрать.)*
ШАБАЛИН *(сирсе)*. Хăпăр ман çумран! Верьял, атя.
КАПИТАН. Эп сана куншăн... *(Шабалина ярса илет, леш ăна çав вăхăтра скальпельпе чикет.)*
БЕЛОКОПЫТОВ. Жора, эс мĕн турăн?
БЕГУНОВ. Вăл ăна чикнĕ.
БЕЛОКОПЫТОВ. Данил, чуп, дежурный машина казарма умне килтĕр.

*Данилов тухса каять.*

КАПИТАН. Белокопытов, комбата шăнкăравла.
БЕГУНОВ. Матрац илсе килĕр! Капитан юлташ, чăтăр кăштах, эпир час.

*Мустафапа Маттуркин матрац илсе килсе ун çине капиатна вырттараççĕ.*

БЕЛОКОПЫТОВ *(телефон турбкине илсе).* «Гранит»! «Гранит»! *(Хурав илтменнипе тухса каять.)*
ВЕРЬЯЛОВ. Ăçтан туртса кăлартăн эс ăна?
ШАБАЛИН. Ак пулчĕ те, вĕçленчĕ манăн служба. Мана пула тек пĕр пăтăрмах та пулмасть. Пурте ирĕккĕн туйĕç хăйсене, телейлĕн.
ВЕРЬЯЛОВ. Эс ху мĕн каланине ху та пĕлместĕн. Мĕнле телей тĕрме кĕтет пулсан? Анчах унта сан мар, ман каймалла. Мана пула ку пĕтĕмпех. Пар скальпельна. *(Скальпельне туртса илет.)* Эпех чикрĕм ăна. Илтрĕр-и, эп чикрĕм Моисеев капитана. Ман сăлтав та пулнă. Эп ăна курайман, вăл – мана. Сан мар, ман явап тытмалла. Пурте илтĕр: капитана эп чикрĕм.
ШАБАЛИН *(скальпельне туртса илет).* Çук, эс мар, эпĕ. Кăна пурте курчĕç. Халь итле мана. Ман вăхăт сахал, кĕçех илсе каяççĕ. Эсĕ халĕ Оксана патне лазарета каятăн, вăл унта, кĕтет сана. Ман çинчен пĕр сăмах та ан кала, ним пулман пек. Эп çук халь, сире ирĕк.
ВЕРЬЯЛОВ. Вăл санах юрататать. Эпĕ ун пурнăçĕнче самантлăха кăна.
ШАБАЛИН. Апла-капла шутлама вăхăт çук халь. Ăна пулăшмалла, пул унпа. Телейлĕ ту ăна*. (Кĕсйинчен çĕрĕсем кăларать.)* Ак çĕрĕсем, пĕрне эп ятарласа ун валли илтĕм, мăшăр пулма та ыйтрăм, анчах вăл сивлерĕ. Халь вĕсем мана кирлĕ мар. Тыт, пар ăна ху ятунтан, вăл савăнĕ, ĕмĕр санăн пулĕ. Ил, ун пек хĕр эсĕ тек нихăçан та тупаймастăн. *(Çĕррисене Верьялова тыттарать.)*
ВЕРЬЯЛОВ. Çук, ку тĕрĕс мар, кун пек пулмалла мар, урăхла пулмалла. Пач урăхла.
ШАБАЛИН. Васка, комбат килсен каяймăн. Хăратăп эп Оксана хăйпе мĕн те пулин туса хурасран.
ВЕРЬЯЛОВ. Эп комбатпа калаçăп, ăнлантарăп...
ШАБАЛИН. Вĕçтер! *(Верьялова чышса кăларса ярать.)* Телейлĕ ту ăна!..

*ЭПИЛОГ. Виççĕмĕш картинăри курăну. Кунта Оксанапа Тамара. Верьялов кĕрет.*

ВЕРЬЯЛОВ. Оксана...

ОКСАНА. Саша? Эсĕ? Эс ман пата-и?
ВЕРЬЯЛОВ. Сан пата.
ОКСАНА. Неушлĕ чăнлăхах ку? Е эс шелленĕрен? Çук, Саша, шелленĕрен мар вĕт. Тамара, кур, Саша кунта. Мĕнле телей!
ТАМАРА. Çак самантра тен çапла, телей.
ОКСАНА. Çук, çак самантра çеç мар, ан кала ун пек. Эс юри калатăн, ăмсаннăран калатăн. Çак самантра çеç мар, яланлăхах. Çапла вĕт, Саша? *(Верьялов чĕнмест.)* Антив çак самантар çеç пултăр, вара мĕн? Юратнă çынпа самант пĕрле пулни те ĕмĕре пырать.
ВЕРЬЯЛОВ. Оксана... Çук, калаймастăп. Акă тыт. *(Çĕрĕсем парать.)*
ОКСАНА. Çĕрĕсем? Мана-и?
ВЕРЬЯЛОВ. Сана.
ОКСАНА *(Тамарана).* Эс саманта тен. Кур, мана валли çĕрĕ. Ĕненес те килмест. Тăхăнтаратăн-и? *(Верьялов Оксана пӳрнине çĕрĕ тăхăнтарать.)* Мĕнле хитре, телей пекех çиçет. *(Тепĕр çĕррине илсе.)* Кăна сана. *(Веряьлов пӳрнине тăхăнтарасшăн.)*
ВЕРЬЯЛОВ *(аллине туртса илет).* Çук, мана мар.
ОКСАНА. Ма сана мар?
ВЕРЬЯЛОВ. Ку Жора çĕрри, вăл ăна сана пама хушрĕ. Хăв ятупа пар терĕ. Вăл питĕ лайăх çын. Эс шутлама та пултарайман, мĕнле лайăх çын вăл. Çĕррисем санрах пулччĕр. Эп сана тиркенине пĕлтермест ку. Эп тивĕç мар сан юратăвна. Жорапа танлаштарсан, эп ниме тăман çын. Ман юрату вăйлă, чăн, унăн çĕр хут та вăйлăрах. Ман пачах та кунта тăмалла марччĕ, ман халь ун вырăнĕнче пулмаллаччĕ. Эп вара кунта тăратăп, тем калаçатăп. Жора вара лере мана пула...
ТАМАРА. Мĕн пулнă унта сирĕн?
ВЕРЬЯЛОВ. Вăл мана таçта илсе каясшăнччĕ, эп кутăнлантăм. Вăл пурпĕрех мана сĕтĕрчĕ. Кайран ротный килчĕ. Жора вара ăна... Пĕлместĕп, ăçтан туртса кăларчĕ вăл çав скальпеле.
ОКСАНА. Çук! Çук. Çу-ук...
ТАМАРА. Эс суятăн.
ВЕРЬЯЛОВ. Суясчĕ те çав, анчах та чăн çав ку.
ТАМАРА. Вăл вилчĕ-и? Моисей...
ВЕРЬЯЛОВ. Вилменччĕ ун чухне.
ОКСАНА. Ак пĕтрĕ те телей. *(Тамарана.)* Эс тавçăрнă, самантлăха çеç пычĕ вăл.

ТАМАРА. Тен пётмен? Тен эпир телей тени вӑл телей мар? Тен телей вӑл пач урӑх? Эпӗ унта каятӑп.
ОКСАНА. Тӑхта, эпӗ те.

*Пурте тухса каяҫҫӗ.*

*Вӗҫӗ.*

Шӑмӑршӑ, 1996 ҫул.